32-296

Уйăп Мишши

# Машинсем кĕрленĕ çĕрте



У-35

Чăвашистат 1932

УЙĂП МИШШИ

У 35

# МАШШИЙНСЕМ КĔРЛЕНĔ ÇĔРТЕ

КАЛАВ

вăтам çулхи аҕасем ваҕҕи

7619бр.

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

ҔĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1932

Послана в производство 13/II-32 г.
Подписана к печати 21/IV-32 г
Редактор Л. АГАКОВ
Тех. редактор М. Сидоров

Чувашлит № 1336 Заказ № 190 Тираж 5000 экз.

17-ая тип. УПП ОГИЗа. Москва, Шлюзовая набережная, 10.

## I. ХУЛА ТУЛАШĔНҪЕ...

Хула тулашĕнҫе пĕҫĕк вăрман. Анҫах вăрманĕ пĕҫĕккĕ пулсан та ҫӳлĕ. Ҫӳлĕ ҫăрăш-хырсем сивĕ ҫил вĕрнипе хăватлăн кашласа лараççĕ. Пĕҫĕк вăрман хыҫĕнҫе меттал савăҫĕ таҫтан сарăлса выртать. Ҫĕрĕн-кунĕн шавлакан машшинсен сасси кунти сывлăша тултарать. Машшинсем шавланипе тсехсем кĕрлесе лараççĕ. Тĕксĕмленсе хуралса ларнă хăйсем. Кантăкĕсем ҫĕтресе тăраççĕ. Савăт тăрпийĕ ҫӳлĕ йăвăҫсенҫен тата ҫӳлерех ҫĕкленет. Таҫтан, инҫетрен курăнса ларать. Хăйĕн хуралса кайнă анинҫен хупхура ҫăра тĕтĕм кăларать. Тĕтĕмĕ, арăслан кăтри пек йăваланса мăкăрланса тăрать. Ҫӳлĕ вăрман ҫине хура хулăм ҫитти пек сарăлса витĕнет...

Хĕллехи ир. Ирхи сывлăш шăп, тӳлĕк. Сасартăк ăна таҫта ҫитеҫҫен хускатса савăт сасси йанăраса кайать. Вăрăмăн ҫăсăлать:

— Ту-у-у-у-у-у-у-ут!..

Савăт ҫывăхĕнҫе, савăт тавра ĕҫлекенсен поҫҫолăкĕ. Пĕҫĕк вăрман тепĕр йенҫе, хула ҫумĕнҫе, савăтра ĕҫлекенсен иккĕмĕш поҫҫолăкĕ. Кунта пĕр хутлă, йе икĕ хутлă йăвăҫ ҫуртсем, ҫул ҫуртсем. Ҫав ҫуртсенҫе савăтри ĕҫлекенсем, рапоҫҫисем пурăнаççĕ.

Савăт сассийĕпе поҫҫолăксем вăранаççĕ. Урамсем хусканаççĕ. Кантăксем електритсă ҫуттипе ҫутăлаççĕ. Кăвакарнă ирхи тавралăха сарă ҫутă пăнҫăсемпе шăтарса пĕтереççĕ.

Рапоҫҫисем хӑнӑхнӑ ку сасса. Ҫак сасӑпа вӗсем ирхине вӑранаҫҫӗ. Ҫак сасӑпа ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Ҫак сасӑпах кӑнтӑрлахи апат ҫийеҫҫӗ. Ҫак сасӑпах ӗҫе пӑрахса ӗҫрен тухаҫҫӗ. Ыран каллех ҫав сасӑпах ӗҫе... Кашни кунах ҫапла вӗсен пурнӑҫӗ. Кашни кунах, кашни ернерех, кашни уйӑхрах ҫапла. Кашни ҫулталӑкрах... Пиллӗкшер ҫул, вуншар ҫул савӑт таврашӗнҫи вуншар пин ҫын ҫав сасӑ тӑрӑх пурӑнаҫҫӗ...

## II. САВӐТ САССИ ӖҪЕ ҪӖНЕТ .

Савӑт сассине пурте илтеҫҫӗ. Вӑл мӗне пӗлтернине пурте пӗлеҫҫӗ. Пӗлеҫҫӗ вӗсем савӑт мӗншӗн кӑшкӑртнине. Савӑт кашни ирех:

— Ӗҫе ту-у-у-у-у-у-ух! тесе йыхӑрать вӗсене.

Рапоҫҫисем хӑвӑртрах тӑрса ӗҫе васкаҫҫӗ. Пӗҫӗк вӑрман витӗр, ҫӳлӗ йӑвӑҫсен айӗпе трамвайсем ҫупа пуҫлаҫҫӗ Вӗсем умлӑ-хыҫлӑ килсех тӑраҫҫӗ. Савӑт карти алӑкӗ умне ҫӗршер ҫын илсе пыра-пыра йараҫҫӗ. Вӗсем те васкаҫҫӗ. Вӗсен те ӗҫӗ пысӑк: ӗҫлекенсене вӑхӑтра савӑта ҫитермелле.

Савӑт карти алӑкӗ таттисӗр уҫӑлса хупӑнать. Савӑт картийӗ хӑйӗн пысӑк ҫӑварӗпе пӗр вӗҫсӗр килсе тӑран ҫынсене хыпса ҫӑтать. Алӑкра тӑракан милитсионерӗ ҫеҫ вӗсене тӗрӗслет. Вӑл ӗҫлекенсен ӗҫ номӗрӗсене пӑхса кашнине пӗрерӗн суйласа кӗртсе йарать. Ҫӗнӗрен пыракан ӗҫлекенсене хирӗҫ савӑтран та ҫынсем тухаҫҫӗ. Вӗсем—ӗҫрен. Ҫӗрӗпе ӗҫленӗ вӗсем. Каҫхи ҫменӑран. Ҫменӑпа ҫменӑ улшӑнать халҫ. Халҫ ҫеҫ мар, йаланах ҫапла. Кашни ир, ҫиҫӗ сехет хыҫҫӑн, ҫапла улшӑнаҫҫӗ вӗсем. Пӗрисем—ӗҫе, теприсем—ӗҫрен.

Станоксем, машшинсем ҫӗнӗ ҫменӑри ӗҫлекенсене кӗтсе лараҫҫӗ. Савӑт картине кӗрсен ӗҫлекенсем хӑйсен тсехӗсене сапаланаҫҫӗ. Авӑ, унта, хӗрлӗ кирпӗҫрен тунӑ савком ҫурҫӗ ҫывӑхнерех мехханиҫҫӗски тсех. Унпа йунашар прокатнӑй, литтейнӑй, куҫнеҫнӑй тсехсем йӗркипе ларса тухнӑ.

Тепĕр ушкăнран урăх тсехсем тата: шурупнăй тсех, пăта тсехĕ, сăнђăр тсехĕсем.

Рапођђисем пурте хăйсен вырăнĕсене, хăйсен станокĕсен умне пырса тăраççĕ. Вĕсем вырнаçнă çĕре савăт иккĕмĕш хут кăшкăртса йараť:

— Ту-у-у-у-ут!..

Пурте вырăнта. Машшинсене майлаштарнă. Шăлса тасатнă. Аслă маçтăр тсехăн пĕр пуçĕнђе пĕђĕк пусма тăрăх хăпараť. Вăл пысăк рупилнĕк авринђен тытса йăс хыпкăђсене хыптараť. Електритсă токне (вăйне) йараť. Електритсăн хĕрлĕ кăвак хĕмĕсем ђăлт! ђăлт! туса çиççе илеççĕ. Моттор кĕрлесе кайаť. Пысăк трансмиççи валĕ (каштийĕ) пуç тăрринђе çавăрăна пуçлаť. Унран ђĕнсемпе (ременсемпе) кашни станок патне ĕç вăйĕ пыраť. Токкарнăй станоксем тимĕр сыпписене çавăрса касма пуçлаççĕ. Фреçĕр станокĕсем шеçтерне вађђи тимĕр кăстăрмасен тупанĕсене шăлласа касаççĕ. Шăлсем касса кăлараççĕ. Пысăк мăлатуксем пĕтĕм тсеха ђĕтретсе шаккаççĕ. Çиççе тăран хĕпхĕрлĕ хĕрнĕ тимĕр касăкĕсене шаккаса кирлĕ пек лапђăтаççĕ. Пĕтĕм тсехсем кĕрлеме пуçлаççĕ. Тсехсенђе пур станоксем шавласа ĕçе тытăнаççĕ. Вĕсен умĕнђе, вĕсен тавра ĕçлекенсем кускалаççĕ. Пиђĕсем тăрăх хура ĕç тарĕ тумлама пуçлаť вĕсен. Çапла ĕçе тытăнаť савăт. Хĕрӳллĕ ĕç пуçланаť савăтра. Кашни кунах çапла. Пĕрмайах...

## III. КАМ ПĔЛМЕСТ МИТРИЂА?

Кам пĕлмест Митриђа савăтра? Ăна пурте пĕлеççĕ. Авă, вăл хăй тсехнелле пыраť. Ăна хирĕç пулакан ĕçлекенсем йаланхи пекех:

— Ей, Митриђ, мĕнле ђупатпăр?—тесе ыртеççĕ.

— Аван ђупатпăрха, аван!—ответлет Митриђ вĕсене хирĕç. Унăн ватăлса пĕркеленнĕ пит-çăмартисем çутăлса

илеççĕ. Сухалĕсем сирĕлеççĕ. Малти икĕ рет сарăлса ларнă шăлĕсем курăнаççĕ. Вăл ватă пулсан та урисене сулăмлăн илсе пусаť.

Пуçĕнҫе унăн çуланса сăранланса ларнă кивĕ карттус Кăвакрах тĕслĕскер, йе ĕлĕк хăçан та пулсан кăвак тĕслĕ пулнăскер. Муталанса пĕтнĕ карттусĕ айĕнҫен ĕнсе хыçнелле хулăм çӳçĕсем курăнса тăраççĕ. Уринҫе кивĕ, пысăк çăмат.

Митриҫ вăл ватă рапоҫҫи. Савăтра вăтăр çул ытла ĕçлет. Унăн ашшĕ те, пиҫҫĕшĕсем те рапоҫҫисем пулнă. Нумай курнă вăл хăйĕн пурнăçĕнҫе. Нумай пĕлет. Вăл патша вăхăтĕнҫе хуçасен савăтĕнҫе те нумай ĕçлесе пурăннă. Нумай çурăмне авнă. 1905-мĕш çула та лайăх астăваť. Унҫухне вăл çамрăк, вăй питти çын пулнăҫҫĕ.

Пĕрре, Питĕртен хăрушă хыпар килнĕ. Хăй патне çăкăр ыйтма пынă выçă рапоҫҫисене, хĕрарăм-аҫасене патша пĕр шеллемесĕр персе пăрахни çинҫен пулнă вăл хыпар. Меттал савăтĕнҫи рапоҫҫисем вара харăс пастовккă пуçласа йанă унҫухне. Пастовккăна йертсе пыраканнийĕ Митриҫ пулнă

Савăт хуçийĕ—вырăсланнă нимĕç. Хайарскер «Пире патша кирлĕ мар». Тĕп пултăр патша тесе кăшкăрнăшăн Митриҫ та лекнĕ. Хуçа хăй тĕллесе кăтартсах Митриҫа политси аллине панă. Вара ун хыççăн виçĕ çул каттăркара пурăннă

...Инçетри, инçетри Çĕпĕрте темиçе пиншер çухрăм тăсăлаť тайка вăрманĕ. Раççейрен темиçе пин çухрăмра, вăрман варринҫе шурлă, лаҫакаллă вырăнсенҫе Нерҫҫинск, Карă тĕрмисем. Çав тĕрмесенҫе виçĕ çул хушши ал-урана сăнҫăр çакса çӳренĕ Митриҫ. Унтан тухса тарнă. Кайран урăх савăтсенҫе ĕçленĕ. Вуникшер, вунтăватшар сехет ĕçлеттернĕ унҫухне. Октăпĕр револҫутси вăхăтĕнҫе те нумай çапăçнă. Кайран хăрах урине амантса пулҫнитсăна выртнă.

Краштăн вăрçийĕ... Рапоҫҫисем пурте вăрçăра. Савăтсем тăраççĕ. Ишĕлсе йапăхса çитнĕ вĕсем. Кайран савăта çĕнĕ-

рен ĕçе йанă... Пайан кунђђенех Митриђ çак савăтра ĕçлет. Çаксене пурне те питĕ аван астăваť вăл.

— Иртнĕ çулсем йăвăр пулђĕç,—тет вăл.—Хăйсен йăвăрлăхĕпе вĕсем ман çурăм урлă каçнă. Мана çĕмĕрсе, ман çурăма таптаса каçса карĕç. Пурин йăвăрăшне те епĕ хам çурăм çинђе тÿснĕ...—тет вара Митриђ хăйĕн иртнĕ кунĕсене аса илсен.

Митриђ ытти рапођђисемпе пĕрлех тсеха кĕрсе хăйĕн станокĕ патне пырса тăђĕ. Унтан çывăхри станоксем çинелле çавăрăнса пăхса илђĕ. Станоксем шăпах. Пĕр сассăр лараççĕ. Тин çеç килсе тăнă рапођђисем çеç килти тумтирĕсене хывса ĕç тумĕсем тăхăнаççĕ. Ĕçе тытăнаççĕ...

## IV. ШУРУПНĂЙ ТСЕХ.

Шурупнăй тсехре ĕçлет Митриђ. Шуруп, тесе винттă валђи пралукран туса хатĕрленĕ шĕлепкеллĕ пуклак вĕçлĕ пăтасене калаççĕ. Малтан пралука станок-автомат ăшне кĕртсе йараççĕ. Станок ăна виçеллĕ татса пĕр пуçне шĕлепке çапса хăвараť. Хăй пĕр ђарăнмасăр шалт-шалт, шалт-шалт, туса пуклак вĕçлĕ пăтасем туса кăлараť. Кĕске пăтасем те, вăрăм пăтасем те, пĕђĕккĕ те, пысăк та, тађка та, çинçе те тăваççĕ вĕсене. Вăл пралукран килет. Пралукĕ тађка пулсан пăтисем те пысăкрах, тађкарах пулаççĕ. Пралукĕ çинçе пулсан пăтисем те çинçе. Кун пек станоксем шурупнăй тсехре темĕн ђухлех. Пĕрре пралукне майласа парсан, виçине туса йарсан машшин хăйех ĕçлет. Çавăнпа та вĕсене автоматсем теççĕ. Рапођђийĕ автомат мĕнле ĕçленине сăнаса вак-тĕвек çитменлĕхсене çеç йусаса тăраť. Станокĕ хăйех ĕçлет вара. Сывлăша хытă йанăратса çăра, çивĕђ, хăлхана çуракан тимĕр сасси кăлараççĕ вĕсем. Вĕсен çывăхĕнђе кăшăлласа çÿрекенĕ пралук кăшкаррисем çавăрăнса тăраççĕ. Ĕçленĕ çе-

мĕн автомат пралука туртсах тăрат̆. Çăмăлтараххăн, йакарах шутăр, тесе пралукне шывпа йĕпетеççĕ. Çав йĕпе пралук çавăрăнса тăракан икĕ кăстăрман вăлак пек тупанĕсен хушшипе шуса туртăнат̆.

Малтан пралук вĕçĕ кăштах тухат̆. Ăна мăлатук пекки шаккаса çавра шĕлепкелетет. Вара тепĕр ик-виçĕ санттиметр тăршшĕ тухат̆. Татăлса шуруп пулса ÿкет. Ун хыççăн машшин пралука çĕнĕрен шĕлепкелесе тататъ. Каллех шуруп пулса айала ÿкет. Çапла пĕр вĕççĕрех шурупсем айала тăкăнса тăраççĕ. Ку ĕçе пĕрремĕш опператси теççĕ.

Ун хыççăн çав шурупсене, шĕлепкисене йакатнă çĕре йараççĕ. Ку иккĕмĕш опператси пулат̆. Унтан шĕлепкисене варринђен кăштах çурса çурăк тăваççĕ. Вара çав пуклак вĕçлĕ пăтасене—шурупсене тепĕр станок-автомат ăшне кĕртсе винттă касаççĕ. Çапла, тин çеç пралук пулнă тимĕр çурăк шĕлепкеллĕ, шĕвĕр вĕçлĕ винттă пулса та тухат̆. Ун хыççăн вăл винттăсене çавра йăвăç йешђĕксене йараççĕ. Ун çине йăвăç кĕрпийĕ хушаççĕ. Йешђĕкĕсене питĕреççĕ те йешђĕксене ђĕнсемпе çыхса çавăрма пуçлаççĕ. Самайђђен çавăрăнса тăнă хыççăн тутăхса ларнă, тĕксĕм хура тимĕр винтсем çапçутă, йапйака винтсем пулса тухаççĕ. Вара винтсене суртлаççĕ. Шăллă тимĕр турасем çине илсе хăш винтти лайăх касăлайман. хăшин шĕлепки çинђе çурăк çуккисене уйăрса илеççĕ. Лайăх пулнă винттисене йешђĕксем çине виççе тултарса пиђетлеççĕ. Савăт клемине çапаççĕ те, ђукунçулсем тăрăх пур çĕрелле те ăсатаççĕ.

Çапла ĕçлет шурăпнăй тсех. Ытти тсехсенђе пăтасем сăнђăрсем, пралуксем, пăђкăсем тата ытти йапаласем те тăваççĕ. Савăтăн саккас паракансем ытла та нумай. Пĕтĕм Совет Сойусĕпе мĕн ђухлĕ çĕнĕрен хапрăк-савăтсем ÿсеççĕ хаљ. Мĕн ђухлĕ çĕнĕ çуртсем, çĕнĕ хуласем ÿсеççĕ... Мĕн ђухлĕ колхоссем, совхоссем... Çавсене пурне те кашни утăмрах,

кашни хăма татăкне ҫапмах пăта кирлĕ. Кашни алăк хăлăпне тыттармах винтсем кирлĕ. Тата вĕҫсĕр сарăлса выртакан вăрмансенђе мĕн ђухлĕ вăрман хатĕрлеҫҫĕ хаљ ĕҫлекенсем. Вăрман ĕҫĕнђе кашни йăвăҫне касма пăђăкă кирлĕ. Кашни лавне тийесе ҫыхса тухма сăнђăр кирлĕ...

Тата пралуксем. Пирĕн ҫĕршыв пысăк ерешмен карти пек телефон, телекраф пралукĕсемпе ҫыхланса ерешленсе пĕтнĕ. Пур ҫĕре те пралук кирлĕ. Ҫак савăт тăваť ҫав пралуксене. Ҫав йапаласене пурне те пур йенђен те ыйтаҫҫĕ. Темĕн те пĕр тăваҫҫĕ ку савăтра. Паллах, кун пек савăтсем Совет Сойусĕнђе пĕрре ҫеҫ мар...

Ҫак савăтра ĕҫлет Митриђ. Савăтăн саккассем ытла та нумай. Ытла та пысăк. Калама ҫук кирлĕ вĕтха савăт тăвакан йапаласем. Кашни винт, кашни пăта пайанхи сотсиалисăм строиттĕлствинђе кирлĕрен те кирлĕ йапаласем. Ҫавсене пит аван пĕлет Митриђ. Ҫавăнпа та вăл савăт ĕҫне пит аван сăнаса пыраť. Кашни иртсе каймассеренех ĕҫхатĕрĕсен пӳлĕмĕ ҫумĕнђе (инструменттаљнăй) ҫакăнса тăракан пысăк хăма ҫине пăхса илет. Вăл хăма ҫинђе тсех хăйĕн промфинпланне мĕнле ĕҫе кĕртсе пыни ҫинђен ҫырса пыраҫҫĕ.

## V. ТСЕХРА ПРОРЫВ!

Пĕрре ҫапла, иртсе пынă ђух, Митриђ промфинплан хăми ҫине тинкерсе пăхса тăђĕ. Ҫӳлтен хăма хĕррипе пысăк, хуралса кайнă саспаллисемпе:

### ШУРУПНĂЙ ТСЕХ ПРОМФИНПЛАНШĂН МĔНЛЕ КĔРЕШНИНЕ КĂТАРТАКАН ХĂМА.

Теккатăшăн:

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш кун | 35 тоннă. | 5-мĕш кун | 28 тоннă |
| 2- „ „ | 33 „ | 6- „ „ | 25 „ |
| 3- „ „ | 30 „ | 7- „ „ | 20 „ |
| 4- „ „ | 30 „ | 8- „ „ | 16,5 „ |

Пĕтĕмпе текатăшăн . . . . . . . . . 217,5-йе 60 прођ.

тесе çырса кайнă. Митриҫ ку ҫыхвăрсене курсан тĕлĕнсех карĕ. «Мĕнлеха капла, кайалла кайма пуçларăмăр?» шухăшлаť вăл хăй ăшĕнҫе «60 проҫ.» тесе çырни унăн пуçĕнҫе кутăн-пуçăн çавăрăнкаласа выҫаса илҫĕ.

— Утмăл проҫҫăн! Утмăл çеç!—кăшкăрса йаҫĕ вăл ăшри сасăпа. Унăн ҫĕрине темскер, йăвăр та вĕри мăлатукпа çапнă пек ыраттарҫĕ...

Ку ҫыхвăрсем çине Митриҫ çеç пăхмасť мĕн. Унăн тавра тата темиçе рапоҫҫи хăма çине тинкерсе пăхса тăраççĕ. Ку ҫыхвăрсем çĕнĕ хаҫ. Ăна тин çеç курнă вĕсем.

— Ăçтан вара утмăл проҫҫăн çеç пултăрха?—ыйтрĕ Митриҫ хăйпе пĕрле тăракан рапоҫҫисенҫен.—Мĕнле вара. Савăт тăманçке ку хушăра, çаплах ĕçленĕ...

— Станоксем пурте ĕçлемен. Рапоҫҫисем хăшĕ, шалу илнĕ хыççăн ĕçе тухмарĕç. Ĕçкелекенсем те пулҫĕç. Ĕç тистиплинĕ ўкнĕ...—терĕ вăй питти, вăтам çулсенҫи Çтапук. Ун сăмаххисем тĕрĕссине кашниййĕ сисрĕç пулас. Ним те ҫĕнмесĕр тăҫĕç пĕр самант.

— Тсехра прорыв!—кăшкăрса йаҫĕ комсомолĕс Витťă.— Тсехра прорыв!

Пурте сасартăк ун йенелле çаврăнса тăҫĕç. Пурте ун çине куçĕсемпе тирĕнҫĕç. Пурин те ҫĕлхисем çинҫе хăрушă сăмах сиксе илҫĕ.

— Прорыв!

## VI. ПРОРЫВ СĂЛТАВĔСЕМ.

Рапоҫҫисем прорыв çинҫен калаçса тăнă çĕре Иван Павăлҫ маçтăр çывхараť. Вăл çуланса хуралса пĕтнĕ «Плокнотне» йăтнă. Вĕттĕн-вĕттĕн пускаласа рапоҫҫисем патне пырса тăҫĕ.

— Мĕн пулнă, йулташсем? Мĕн канашлатăр?—терĕ вăл питĕ, çинçерех сассипе. Унтан çынсем пăхнă çĕрелле вăл та

тинкерсе пăхрĕ. Хăй куçлăхĕ витĕр нађартарах курať пулас. Пуçне ђалăштарса куçлăх айаккипе ђалăшшăн пăхаť. Куçĕсем пĕђĕк хутаç ани пек пĕркеленђĕç. Çамки урлă темиçе йĕр йĕркеленсе тăђĕ.

— А-а, промфинплана тултарни çинђен пăхатăр! Та-а, плана 60 прођ. çеç тултартăмăр ку теккатăра. Нумай саккассене тăвайммарăмăр. Анђах... и... и... сăлтавсем те пĕђĕккех мар çав...

— Мĕнле сăлтавсем?—харăс ыйтрĕç пурте. Рапођђисен çулă, тарлă пиђĕсем çу сĕрнĕ хурăç пек йалкăшса тăраççĕ. Хурăç пек хытă саçăллă вĕсем. Кашни питĕнђе хурăçла çирĕплĕх. Анђах... кашнинех прорыв сăмах шухăша йанă...

— М... м...—татах пуçларĕ маçтăр—пралук çитмерĕ. Проккатнăй тсех вăхăтра çителĕклĕ пралук парса тăраймарĕ. Станоксем темиçе те пăсăлса ĕççĕр ларђĕç. Ĕçлекенсем нумай ĕçе тухманнисем пулђĕç. Сăлтавсем нумай вĕсен... Сăлтавсем... пысăк...

— Ну, йар йумахха!—терĕ ăна Митриђ. Епĕр ăна хамăрах аван пĕлетпĕр. Айăп хамăрта—терĕ вăл шăлне çыртсе:

— Тсехра прорыв! Партти йађђейкки мĕн калаť кун пирки?—тесе ыйтрĕ пĕђĕкçеç мăйăхлă Çеркей.

— Партти йађейкки прорыва пĕтерме пур вăйне хураť. Ĕнер каç кун пирки тахçанђђен пухура сӳтсе йаврĕç. Çитес кунсенђе тсеха прорывран кăлармаллах, тесе йышăнђĕç—ответлерĕ ăна хирĕç Саңук токкăр.

— Пайан кăнтăрлахи апат вăхăтĕнђе миттĕнк пулмалла...

## VII. РАПОЂЂИСЕМ ХУСКАЛСА КАРĔÇ.

Тсехра ĕçлекенсем пурте хусканса карĕç. Пурне те «прорыв» сăмах хускатса йађĕ.

— Мĕнлеха, хамăр йата варлатпăр? Ĕçлекен йатне, пролеттари йатне варлатпăр? Хăçан та пулин епĕр хамăр йата çĕре ÿкерни пулни? Çук! Хамăр çинђен хура йĕре сирсе пăрахас пулаť пирĕн.—Хĕрÿлленет Митриђ.

— Епĕ краштăн вăрçи пĕтсен çилпе шăхăрса ларнă тсех кăшкаррине килсе кĕтĕм. Савăт ĕçлеместђĕ унђухне. Йалт ишĕлсе пĕтнĕђђĕ. Ĕç хатĕрĕсене, йапаласене вăрласа туртса кайса пĕтернĕђђĕ. Епĕ савăта хам аллăмпа ĕçе йама пулăшрăм. Ăна ура çине тăратнă ђух мĕн ђухлĕ ĕçлерĕм пулĕ. Ман куç умĕнђе, епĕр хытă тăрăшнипе савăт ура çине тăрса ĕçе пуçларĕ. Çĕнĕ машшинсемпе çĕнелђĕ. Пайан куна çитрĕ. Епĕ, ватă пролеттари, савăт йатне хуратма парăпи? Çапла мари, йулташсем?—тет Митриђ хĕрÿлленсе.

— Çапла, Митриђ, тĕрĕс!—Ответлет ăна хăйне йунашар станок çинђе ĕçлекен йулташĕ.

— Çапла, çапла, Митриђ! Хамăр йата варлама памăпăр!—ответлерĕç ăна ыттисем те, пысăк хăма патĕнђен харпăр хăй вырăнне утса.

Тсехра прорыв. Тсех хускалса карĕ. Ĕçлекенсем хускалса карĕç...,

Митриђ хăйĕн автоматне шăлса тасатрĕ. Кĕçĕн маçтăртан çĕнĕ нарет (ĕç) илђĕ. Автоматне йĕркелерĕ. 8 сехет çитнĕ çĕре савăт кутокĕ кăшкăрса йађĕ. Моттôр кĕрлеме тытăнђĕ. Çÿлте трансмиçси каштийĕ (вал теççĕ ăна) хăвăрттăн çаврăнма пуçларĕ. Митриђ çав каштаран килекен ђĕне пушă шкив çинђен ĕç шкивĕ çине куçарђĕ. Станок шавласа ĕçе пуçларĕ. Шалт-шалт. Шалт-шалт.—шаккаť вăл. Пĕр вĕççĕр шурупсем туса кăларса çĕре тăкаť.

Митриђ автомат мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тухрĕ. Шурупсене мĕнле çапса кăларнине пăхрĕ. Виçеллех, аванах çапса кăлараť. Малалла та çак виçепех ĕçлеме йураť. Унтан вăл çĕтĕк тутăр татăккипе машшин çăвĕпе, тимĕр-тăмăр тутăхĕ-

пе, тусанӗпе варланнӑ аллине шӑлса тасатрӗ. Кӗҫиинҫен сӑмса тутрийӗ кӑларса ҫамки ҫинҫен пӑрҫаланса тӑракан тарне шӑлҫӗ. Ун куҫӗсем унпа йунашар ларакан виҫҫӗмӗш автомат ҫине ӳкрӗҫ.

— Пайан та ӗҫе тухман Йерефей,—тесе илҫӗ вӑл хӑйне хӑй.—Пӑсӑлса карӗ сын. Ӗҫет. Уншӑн савӑтри прорыв нимӗн те мар. Пролеттари йатне ҫӗртет. Прокулшҫӑк!..

Аллинҫи тимӗр тыткӑҫа аллине тытса хытӑрах ҫӑмӑртарӗ вӑл. Унӑн ҫилли тата хытӑрах тӑвӑнса килнипе ҫӗре лаҫ сурҫӗ.

Таврара машшинсем ҫӗмӗрлеҫҫӗ. Ӗҫлеҫҫӗ. Таврара ҫун кӳртнӗ, ӗҫ вӑйӗ панӑ тимӗр-тӑмӑр купийӗ. Ҫӗнӗсен шуҫӗ сук. Кӑшӑлтатса айалтан ҫӳле, ҫӳлтен айала ҫупаҫҫӗ вӗсем. Ҫӳлӗ, хуралса ларнӑ кантӑк маҫҫа витӗр машшинсем ҫине кун ҫуттийӗ ӳкет. Моттторсем кӗрлесе уласҫӗ. Ҫынсем станок—автоматсен таврашӗнҫе кускалаҫҫӗ. Ӗҫлет тсех. Савӑт ӗҫлет. Ӗҫ вӗрет. Машшинсем васкавлӑн хӑйсен хурҫӑ шӑлӗсемпе тимӗре, пралуксене ҫӑмлаҫҫӗ. Кирлӗ йапаласем, кирлӗ хатӗрсем тӑваҫҫӗ. Пралуксене ҫырта-ҫырта татса шлепкелентереҫҫӗ те айалалла сурса тӑкаҫҫӗ. Аслӑ тсех ҫӗтресе ҫеҫ тӑраӗ. Ҫук, тсех ҫеҫ мар, тсехри сывлӑш та ҫӗтрет...

## VIII. ПУРТЕ МИТТӖНКА.

Савӑт кутокӗ вӑрӑммӑн йанӑраса карӗ. Машшинсен тӗпренҫӗклӗ шавӗнҫе вӑл, хулӑм хӗлӗх сасси пек нумайҫҫен ҫӑсӑлҫӗ.

Шӑпах вуникӗ сехет. Кӑнтӑрлахи апат ҫимелле.

Аслӑ маҫтӑр пӗҫӗк пусма тӑрӑх хӑпарҫӗ те, хӑрах аллипе рупилнӗк таҫка авринҫен тытса, ӑна вӗҫерҫӗ. Пралук тӑрӑх карӑнса, тӑвӑнса сыхланса килекен електритсӑ вӑйӗ ҫӑлт туса татӑлҫӗ. Ҫинҫен шӑхӑрса тӑракан моттор сасси вӑрах-

хăн хулăмланђĕ. Хулăмăн уласа, моттор ĕçлеме ђарăнђĕ. Мађђа тăршшипе ђăсăлакан вăрăм трансмиççи каштийĕ те çаврăнма ђарăнђĕ. Ђĕнсем айалтан-çӳле, çӳлтен айала ђупма пăрахрĕç. Станоксем шăпланђĕç. Тсех сасартăк шăпах пулђĕ. Хăлхара çеç тсех хаљ те ĕçленĕн туйăнаť. Машшин сассийĕ ђарăна пĕлмесĕр кĕрленĕ пек йанăраť...

Рапођђисем шыв пăрки кранĕсен айĕнђи вăрăм вăлашка умĕнђе йĕркеленсе тăрса, аллисене çăваççĕ.

— Пурте миттĕнка!—илтĕнђĕ Виťťă—комсомолĕс сасси.

— Пурте миттĕнка!—ламран лама карĕ сăмах.

Тсехра мишшинсем ĕçлеме ђарăнсассăнах, станоксем тăрсассăнах ик-виçĕ çĕртен ратио сассийĕ илтĕнме пуçларĕ. Илемлĕ мусăк кĕввисем йухаççĕ хăлхана. Кăнтăр каннинђе йаланах ратио итлеççĕ рапођђисем. Йе ратио-хаçат, йе мусăк, йурă...

Анђах пайан ратио шухăшĕ çукха. Митриђ аллине шăлса типĕтрĕ те, ратио-провăта тытса штепсĕлне вĕçертрĕ.

Ратио шăпланђĕ.

Тсех пĕр пуçĕнђе темиçе çĕр çын рапођђисем пухăннă. Кашнийех хура, çуланса пĕтнĕ питлĕ куçлă хура, çуланса пĕтнĕ тумсемпе. Вĕсем хушшинђе хĕрарăмсем те ђылай.

## IX. ПАРТТИ ЂĔНЕТ.

Савăтри партти йађђейккин çекреттарĕ, Çимин йулташ, маларах тухса тăђĕ. Ун аллийĕнђе—пĕђĕк хут татки. Вăл ун çине кăшт пăхса илђĕ. Унтан хăй тавра пухăнса тăнă çынсем çине пăхса çаврăнђĕ. Лапкă сасăпа сайран пуçларĕ.

— Йулташсем!

Пурте пуçĕсене ун йенелле çавăрђĕç. Темиçе çĕр çын темиçе çĕр мăшăр куçĕсемпе ун çине пур йенђен те пырса тирĕнђĕç.

— Сирĕн тсехра та, савăтра та прорыв,—терĕ вăл «прорыв» сăмах ҫине сассипе хыттăн пусса.—Епĕр промфинплана тултараймастпăр. 60 прођ. ҫеҫ тултарнă. Кайалла ђакатпăр. Ку йурăхсăр йапала. Епĕр йурăхсăр ĕҫленине пĕлтерет. Пирĕнне пуринне те йатсене варлаť. Савăт йатне пайанхи хаҫатра хура хăма ҫине ҫапнă. Камра айăп. Айăп хамăртах. Ĕҫлеме пĕлместпĕр. Ĕҫ тистиплинĕ нађар. Сотсиалисăмла ăмăрту хут ҫинђе ҫеҫ. Прикатăсем орканисатсилемен. Ĕҫлекенсем харпăрхăй ĕҫне, пĕр-пĕрин ĕҫне лайăх тĕрĕслемеҫҫĕ. Ĕҫхатĕрĕсемшĕн, хăйсен станокĕсемшĕн, тата хăйсем ĕҫлесе тунă йапаласемшĕн ответ тытмаҫҫĕ. Йапаласене авантарах, тĕплĕрех тăвас, тесе тăрăшмаҫҫĕ. Ĕҫе ђас-ђасах тухмаҫҫĕ.

— Йулташсем! Камран килет ку? Йăлтах хамăртан! Хамăр савăтра епĕр хамăр хуҫа. Пирĕн ҫын куҫĕнђен пăхмалли, ҫынран кĕтмелли ҫук. Пролеттарисем ниме те ҫынран, урăххисенђен кĕтмеҫҫĕ. Полђшевиксем нихҫан та ĕҫе хăй халлĕнех пуласса кĕтмеҫҫĕ. Полђшевиксем нихҫан ĕҫрен, йăвăрлăхсенђен хăрамаҫҫĕ. Йăвăрлăхсенђен хăҫан хăранă епĕр. Нихăҫан та, нимрен те хăраман. Пур ђух та вирлĕн ҫапăҫнă. Халђ ҫапăҫса илеймĕпĕри епĕр йăвăрлăхсене? Кам ҫапла шухăшлаканни пултăр?

...Рапођђисем Ҫимин йулташа тађă кăшăлпа кăшăлласа илнĕ. Вĕсем ун тавра тăраҫҫĕ. Вĕсем унпа. Вăл мĕн каланине тимлесех итлеҫҫĕ. Вăл ђăн калаť. Вăл хăй те пролеттари. Пурин пекех тем тĕрлĕ йăвăрлăхсене тӳссе курнă ҫын. Прорывшăн ђăнах та, пурте епĕр айăплă... тенĕн туйăнаť кашни...

Ҫимин йулташ нумай каламарĕ, анђах вăл сăмахĕ вĕҫнелле хĕрӳлленсе кайрĕ.

— Парттин йађђейкки ҫитес теккатăна прорыва пĕтермелли штурмлă теккатă тăвас тесе йышăнђĕ. Полђшевиксем хăйсен сăмахне сывлăша вĕҫтермеҫҫĕ. Вĕсем мĕн каланине

тăваççех. Пољшевиксем çĕнтерме пултарайман креппăçсем çук, тенĕ Сталин...

— Тĕрĕс! Тĕрĕс!—Пурте алă çупса йађĕç миттĕнкра. Пурин те пусăрăнђăк кăмăлĕсем çĕкленђĕç. Пурин те прорывпа пусăрăннă ђĕрисене прорыва пĕтерме хăпарнă хĕрӳллĕх пырса тăвăнђĕ...

Хытă итлерĕç Çимин йулташа. Ун сăмаххисем кашни ђĕрине кĕрсе ларђĕç.

— Ђăнах та, штурм туса прорыва пĕтермеллех—терĕç ĕçлекенсем хăйсен хушшинђе.

— Комсомолĕссенђен Виттă йулташ сăмах илет!—пĕлтерђĕ Çимин.

Виттă сапаланнă çӳçĕсене пилĕк пӳрнипе туракаласа çынсен умне тухса тăђĕ.

— Комсомол йађђейкки прорыв çинђен сӳтсе йаврĕ. Комсомолĕссем штурм теккатинђе ђи хастарлă ĕçлеме сăмах параççĕ. Епĕр ытти çамрăксемпе утарлă прикатăсем орканисатсилерĕмĕр. Ваттисене те ăмăртăва ђĕнетпĕр!

— Митриђ, Митриђ, тухса кала, ваттисенђен тĕртеççĕ Митриђа айăкран.—Çамрăксенђен йулас мар ара...

Митриђ пасăрах калама хатĕрленнĕ. Вăл çамрăксем утарлă прикатăсем орканисатсилесси çинђен сиснĕ. Ваттисемпе кăшт-кашт шут тукаланă.

— Мана сăмах парха, Çимин йулташ. — аллине çĕклерĕ Митриђ.—Епĕ çамрăксене пролеттарилле ответ парас тетĕп тата ваттисенђен.

— Виттă, пĕтертĕни есĕ?

— Пĕтертĕм!

— Çамрăксен ђĕнĕвне хирĕç ответ пама Митриђа сăмах паратпăр.

— Ђимха, епĕ пĕр сăмах калам, — çинçен илтĕнђĕ хысалтан.

— Кам вăл? А-а, Маккар, ну, кала еппин.

— Вот мĕн. Ман шухăшпа нимле штурм амакĕ те пулă шас çук пире. План ытла пысăк. Ытла хыт васкатаççĕ. Ђи малтан плана кăштах пĕђĕклетмелле пирĕн. Тата апата аванлатмалла. А прикатă тавраш̆ĕ-пустуй вăл. Ĕлĕк ахалех аван ĕçленĕ! Хăтланђђăр кам ĕççĕр аптăранисем...

— Суйаť вăл! Суйаť!—кĕрлесе карĕ таврара. Хыçалтан çинçерех сасăпа çухăрса тăракан Маккар сассине пĕр самант ра путарса лартрĕç. Вăл урăх ним калама аптăрарĕ. Рапођђисем пурте ăна хирĕç иккен. Икĕ типсе кайнă аллине саркаларĕ те, тата хыçаларах кайса тăђĕ... Унăн хыткан типĕ пиђĕ çинђен ÿђĕсем турткаланса илђĕç. Вăл нимĕн те ђĕнмерĕ урăх.

— Тăвансем!—пуçларĕ Митриђ.—Суйаť вăл! Маккар ĕçрен хăраť. Йăвăрлăхсенђен хăраť. Ун пек ĕçрен хăраканнисене курнă епĕр. Ун пеккисене пирĕн хамăр çул çинђен шăлса çеç ывăтмалла. Епĕ хам йенђен акă мĕн каласшăн. Епĕ çак савăтра нумай çул ĕçлетĕп. Ĕлĕк йухăнса çитнĕ савăта ура çине тăратассишĕн сахал тар йухтарман. Епĕ пурнăçра нумай курнă. Хам йата, пролеттари йатне пĕрре çĕртмен. Вăтăр çул ĕçлетĕп епĕ савăтра. Хаљ те савăт йатне, хамăр пролеттари йатне çĕртме памăпăр. Партти йађђейкки тĕрĕс тунă. Штурм теккати тумаллах. Пурин те мĕн пур вăйа хурса савăта прорывран кăлармаллах. Маккар шухăшĕсем пирĕн мар.

7619бр.

— Çамрăксен йађĕпе Виттă ђĕннине хирĕç епĕ вĕсемпе ăмăртăва тухма килĕшетĕп. Епĕр, ватă рапођђисем, хамăр утарлă прикатă органисатсилетпĕр. Тĕплĕ ĕçлеме, васкавлă ĕçлеме сăмах паратпăр. Хамăр йенђен иншенерсене ăмăртăва ђĕнетпĕр.

Алçуппи патăртатса карĕ тсехра. Митриђăн шантарса каланă сăмаххисем сулăмлăн йанăраççĕ. Пурне те килĕшрĕç

вĕсем. Пурте ĕненђĕç ăна. Ĕненеççĕ Митриђа. Вăл сăмахпа выљама йуратмасť...

— Епĕр, савăтри иншенерсем, сирĕн ђĕнĕве йышăнатпăр. Прорыва пĕтерме пур вăйа хурăпăр...—терĕ Алексантрăв иншенер куçлăхĕсене çутăлтарса. Ун сăмаххисене рапођђисем питĕ хаваслăн хапăлласа йышăнса, ђылай вăхăт алă çупрĕç...

Пољшевиксем сăмахпа выљама йуратмаççĕ.

— **«Çитес теккатă штурм теккатийĕ. Савăта прорывран кăларатпăр»** тесе йышăнса хуђĕ миттĕнк.

Çимин йулташ кĕске йышăнăва вуласа пађĕ. Миттĕнк алă çупса йађĕ. Пурте йышăнђĕç. Хирĕç каласса та Маккар çеç каларĕ те, вăл та йышăнăва вулађђенех миттĕнкран тухса шăвăнђĕ...

Рапођђисен кăмăлĕсем хăпарса çитнĕ. Çĕнĕ шанђăкпа, çĕнĕ хастарлăхпа саланђĕç вĕсем миттĕнкран. Çĕнĕ шанђăкпа, çĕнĕ хастарпа ĕçе тытăнђĕç.

Пролеттарисем сăмахпа выљама йуратмаççĕ...

## X. ПРИКАТĂСЕМ ĂМĂРТАÇÇĔ.

«Прорыв» сăмах мĕн пур тсехсене пур савăта хускатса йађĕ. Савăт хаçађĕ кашни кунах ђи малти странитсинђи пысăк саспаллисемпе: **«Савăтра прорыв. Савăт хура хăма çинђе. Пролеттарисем! Хăвăр хастарлăха кăтартăр»** тесе çапаť. Кашни рапођђи аллине саланаť. Пур çĕрте те прорыв çинђен калаçаççĕ...

Рапођђисем утарлă прикатăсем орканисатсиленĕ. Митриђ хăй прикатипе ĕçлет. Вăл кашни ир хăй прикати ђленĕсене тĕрĕслет. Ватă, пĕђĕк мăйăхлă Çеркей те ун прикатийĕнђе. Вăрăм, хыткан питлĕ Киркка, питĕ йўрĕк, ăшаланђăк Ваçкă,—лутрарах, патмар çын. Тата Мирун—питĕ ха-

йар анђах аван рапођђи. Вăл Митриђăн ђи çывăх тусĕ. Вĕсем пурте пĕр прикатăра Хастарлăн ĕçе тытăнђĕç.

Çамрăксенђен Виттă прикатир. Митриђпа Виттă кашни ир пĕр-пĕрне тĕрĕслеççĕ.

— Манăн 100% ĕçе тухнă пайан!—тет хавасланса Митриђ. Пĕлет вăл, унăн прикатинђе шанђăклă çынсем.

— Манăн та 100%!—ответлет Митриђа хирĕç Виттă.

— Маттур, Виттă! Çамрăксем пултараççĕ вĕсем. Епĕр хăт ваталнă ĕнтĕ. Сирĕн—малалла вĕт.

— Е-е, ватă, терĕ. Епĕр ватă пулсан та тепĕр çирĕм çулхи кађђăсенђен иртеретпĕр хаљ. Сухалсем вăрăм пулсан алсем çирĕп пирĕн хаљ. Во-о!—тесе йађĕ хура пĕђĕкрех сухаллă Мирун, хăйĕн ђавса таран тавăрнă çуллă хура аллине хытарса. Ђăнах та, аллине хытарса авнă ђухне, алтунисем тађкан, вăйлăн курăнаççĕ. Çийелтен кăвакарса карăнса тăран йуплĕ йун тымаррисем тата ытларах карăнса пăвăнаççĕ.

— Во-о! Вăйсем пур хаљ!—терĕ вăл тепĕр хут.

— Пĕлетĕпçке, пĕлетĕп,—хутшăнаҭ Митриђ.—Тимĕр-хурăç ĕçĕнђе хытнă пирĕн алăсем... Миçе çул ĕçлеттĕнђђĕха çак есĕ савăтра.

— Йаппун вăрçиђђен пиллĕк çул малтан ĕçлеме пуçланă. Ун ђух Ринперк хуçа-аллинђе пулнă пирĕн савăт. Вырăсланнă нимĕçђĕ хăй. Унтанпа çаплах савăтрах вара...

Та-а! Сахал мар! Питсем те ахалех пĕркеленмен пуљ çав. Анђах хаљ çамрăксем ӳсрĕç ĕнтĕ пире улăштарма. Тимĕрхурăç ĕçĕ вĕсене те хытарĕ акă.

Виттă вĕсем çине пăхса кулкаласа тăраҭ.

— Ну, йурĕ, йурĕ... çитĕ мухтанма. Есĕр те пирĕн пекех çамрăк пулнă вĕт...

Вăл çамки çине йухса аннă тарне алтунипе шăлса илђĕ. Унтан алли çине çĕтĕк, хура тутăр татăкки саркаласа хурса аллине шурупсем тăкăнса тăнă çĕре айалла тытрĕ. Шуруп-

сем пиге пĕçерсе тухса ӳкеççĕ. Ђипер пралукран çур çеккунт хушшинђе шĕлепкеллĕ, пуклак пуçлă пăта пулма йăвăр мар. Анђах хăвăрт ĕçленипе, тимĕрпе-тимĕр хытă çапăнса калама çук хĕрсе кайаççĕ. Шуруп та çапăнса тухнă ђухне хытă хĕрсе тухаť. Çавăнпа та ăна тутăр татăкки çине анђах илме пулаť.

Виттă алли çине ӳкнĕ тăват-пиллĕк шурупа илсе çавăркаласа пăхрĕ. Куçне хĕссе йенĕсене тĕрĕслерĕ. Станок-автомат ђиперех ĕçлетха.

Митриђпа Мирун та хăйсен хушшинђе тем калаçса кулкаласа илђĕç.

— Прак ан пултăр, тет пулĕ Виттă. Пирĕн те пракпала кĕрешмелле. Ан пултăр прак...

## XI. «ПЛАККАТСЕМ».

Çав вăхăтрах, ăмăртса ĕçлекен прикатăсем патнелле пĕр ушкăн çывхараť. Виçĕ комсомолĕс, виç-тăват пионер. Вĕсем станоксен хушшисемпе иртkелесе çӳреççĕ. Кашни станока тĕрĕслеççĕ. Кашни рапођђине тĕрĕслеççĕ. Йе хăйсем пĕр-пĕр çĕре пырса тăрса калаçкалаççĕ. Пĕри аллинђи плок-нођĕ çине темскер çыркалаť те, каллех малалла утаççĕ.

Ку ушкăн—çăмăл кăвалери прикати. Парттипе комсомол йађђейккисем хушнă тăрăх, вĕсем тсехсем тăрăх, ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе çӳреççĕ.

— Пăхха, ку кĕтесре мĕн ђухлĕ ăпăр-тапăр, тимĕр-тăмăр выртаť!—кăшкăрса йађĕ прикатă ђленĕсенђен пĕри—Ваљă, пионеркка.

— Ђăнах та, тсехрах тытаççĕ. Йурамасť апла. Кăна хăвăртрах шăрантарма йамалла. Патшалăха тимĕр кирлине пĕлмеççĕ пулмалла!—хушса хуђĕ Петтă пионер.

Аслийĕ вĕсен, прикатирĕ—Валоҫă. Вăл тимĕр-тăмăр купине йĕри-тавра ҫавăрăнкаласа пăхса илҌĕ те унтах хура сăрлă панккă, хут йатса тăракан Шурă пионерккăна хушрĕ.

— Ҫыр, халех ҫырса ҫап,—терĕ.

Пĕр самантрах тимĕр-тăмăр купийĕ ҫинҌе пысăк саспаллисемпе:

## «МАНА МАННĂ. ЕПĔ ПАТШАЛĂХА ПИТĔ КИРЛĔ. ХĂҪАН ИЛСЕ КАЙСА ИРĔЛТЕРĔҪШИ»?

тесе ҫырнă пысăк плаккат курăнса йулҌĕ.

Прикатă пит ҫумалли шыв пăрки кранĕ патне пырса тăҌĕ. Кран айĕнҌе вăрăм вăлашка тулли шыв. Кўлленсе влашка хĕрринҌен ҫĕре йухса тăраҫ. СупăнҌлĕ, хура таса мар шыв. Урайне таҫта ҫитеҌҌен кўлленсе йĕпетнĕ. ПылҌăк. Тепĕр плаккат ҫапăнҌĕ те.

## «КУНТА КĂВАКАЛСЕМ ИШЕҪҪĔ, СЫСНАСЕМ ЛАҌĂРТАТАҪҪĔ. ĂҪТА САНКОМ»?

Ĕҫхатĕрĕсен пўлĕмĕ, инструменттаҌнăй умĕнҌе пысăк хăма йешҌĕк выртаҫ. Ҫўллĕшĕ—ҫын ҫўллĕшĕ пур хăйĕн. Тăршшĕ икĕ меттăр ытла. Хăми ҫине йут Ҍĕлхепе, нимĕҫле: Berlin—N. Nowgorod (Перлин—Ҍулхула) тесе ҫырнă.

— Ку—йут патшалăхран илсе килнĕ ҫĕнĕ автомат,—станок,—терĕ Волоҫă.

— Куна тахҫанах илсе килнĕ. Вăл Ҍи ҫĕнĕ йышши, аванлатнă автомат. АнҌах икĕ уйăх ĕнтĕ кунта уссăр выртаҫ. Пăхха, мĕн пек илемлĕ вăл! ЙешҌĕкне те ҫуррине уҫнă ав унне...

Ҫӑнах та, йешҫӗк хӑмисене пӗр йенҫен уйӑра-уйӑра хунӑ. Шалта, тин ҫеҫ сӑрласа типӗтнӗ пек вӗрҫӗнӗ машшинӑ кӳрӑнса тӑраҭ.

— Куншӑн ылттӑн тӳленӗ вӗт.—терӗ Шурӑ.

Ҫӗнӗ автомат ҫумне пысӑк плаккат ҫырӑнса та ҫапӑнҫӗ.

## «ХӐЙАККӐН ВЫРТСА ЫВӐНТӐМ. ХӐҪАН ӖҪ ПАРӖҪ МАНА»?

Прикатӑ татах малалла утрӗ. Виҫҫӗмӗш опператси тунӑ ҫӗрте, шурупсене винттӑ каснӑ ҫӗрте пӗр йӗркийӗ сакӑр станок пӗтӗмпех ӗҫлемеҫҫӗ. Ыттисем ҫинҫе шӗлепкеллӗ пӑтасем ҫӑрӑлтатса ҫавӑрӑнаҫҫӗ. Ҫӑрӑлтатса вӗсен тавра винттӑсем касӑлаҫҫӗ. Ҫӑрӑлтатса ҫинҫе, вӗри тимӗр ҫунӑкӗсем ункӑн-ункӑн касӑлса пӗтӗрӗнсе ӳкеҫҫӗ. Шӑпӑртатса шывӗ пӗрӗхсе тӑраҭ. Хӗрсе кайнӑ ӑййине—реҫетене сивӗтсе тӑраҭ. Ку йӗркере уйрӑмах шӑпах. Станоксем ӗҫлемеҫҫӗ.

— Мӗншӗн ӗҫлемест вара ку йӗрке?—ыйтрӗ Волоҭӑ йунашар станоксем ҫинҫе ӗҫлекен хӗрарӑмран.

Хӗрарӑм варланнӑ, йе аллине саппунӗпе шӑлса типӗтрӗ те, ӑнсӑртран ӑна ҫапла ыйту панипе тӗлӗнсе:

— Ремонт туман. Ремонт тумалла вӗсене. Икӗ ерне ӗнтӗ пушӑ лараҫҫӗ. Ремонт тутармаҫҫӗ темшӗн,—терӗ. Хӑй каллех машшинсем патне пуҫне ҫикрӗ.

— Та-а,—терӗ Пеҭҭӑ,—Мӗн ҫухлӗ ахалҫ ларнӑ вӗсем?

— Мӗн ҫухлӗ винт кӑлараҫҫӗҫ икӗ ерне хушшинҫе!

— Виҫӗ сменӑпа ӗҫлесен питӗ нумай ӗҫлемеллескерсем,—хутшӑнаҭ Шурӑ. Ҫак ҫӑрмавсем ӗнтӗ савӑтра прорыв тӑваҫҫӗ.

— Йурӗ! Ҫыр, Шурӑ,—терӗ Волоҭӑ.

Шурӑ аллинҫи кистӑҫкӑ аврипе ҫамкине хыҫса илҫӗ. Кистӑҫкине панккӑ ӑшне, хура сӑр ӑшне ҫиксе кӑларҫӗ те:

**«ИКĔ ЕРНЕ ĔÇСĔР. РЕМОНТ КĔТЕТĔП. ПРОРЫВШĂН ЕПĔ ТЕ АЙĂПЛĂ. АНĔАХ МАНА СЫВАТСА ĔÇ ПАМАÇÇĔ».**

тесе çырса хуĕĕ.

— Ну, аван çапатпăр та вара!—кулса йаĕĕ Петтă.

— Ку плаккатсене курсан аслă маçтăрăн та, тсех пуçлахĕн те пиĕĕсем хĕрелмеллĕх пур!—кулĕĕç прикатă ĕленĕсем малалла утнă çемĕн. Волотă аĕасем çине пăхса илĕĕ.

— Вĕсен çеç мар. Пĕтĕм рапоĕĕисен пиĕĕ хĕрелмелле.— Татса хуĕĕ вăл.

— Ĕăнах та, рапоĕĕисем хăйсем те айăплă. Вĕсенĕен килет вĕт вăл, вĕсем асăрхамаççĕ,—хушса хуĕĕ Шурă утнă май.

— Акă, ку автомат тата мĕншĕн ĕçсĕр ларать?

Вĕсем пĕрремĕш опператсиа тунă çĕре çитсе тăĕĕç. Кунта пралукран шуруп çапаççĕ. Ĕăнах та, вĕсен умĕнĕе пĕр станокĕ ĕçсĕрех ларать.

— Каллех ремонт кирлĕ пуĕ. Çавна ыйтать пуĕ,—терĕ Ваççă.

Кунти рапоĕĕисем прикатă тĕрĕслесе çÿренине паçăрах курĕĕç. Хаĕ Митриĕ вĕсен йенелле пăхса:

— Мĕн ĕçпе çÿретĕрха есĕр, аĕасем,—тесе ыйтрĕ вĕсенĕен.

— Ун çинĕен кайран калăпăр. Çак станок мĕншĕн ĕçсĕр ларать?—хирĕç ыйту паĕĕ Волотă Митриĕа.—

— Мĕн, ремонт тăвасса кĕтети?

— А-а, вăл станоки? Унăн хуçине ремонт тумалла.

— Мĕн пулнă.

— Йерефей ĕçлет унта. Вăл пайан та ĕçе тухман. Иквиçĕ кун ĕçе тухмарĕ ĕнтĕ. Кашни теккатăрах икшер кун, виçшер кун ĕçе тухмасть. Шалт пăсăлĕĕ çын. Апла марĕĕ...

— Мĕн пулнă тата ăна? Ђирлеримха?

— Мĕн ђирĕ — хăйамађĕ пултăр, ĕçет вăл. Ђирлемен, ĕçет. Пролеттари йатне çĕртет.

Прикатă нумай калаçса та тăмăрĕ. Малалла утрĕ. Йерефейăн пушă, шăпах ларакан станокĕ çинђе çеç инçетрен курăнса плаккат кăшкăрса йулђĕ.

«ХУÇИ ĔÇЕТ. ПРОКУЛШЂĂК».

Унтах ўкерђĕк пур тата. Ўкерђĕкĕ çинђе тинĕсе çын путаĭ. Хăй кăшкăраĭ:

«КРАВУЛ! ЕРЕХ ĂШНЕ ПУТАТĂП! ÇĂЛĂР»!

## XII. ПРОРЫВРАН ТУХАТПĂР.

Савăтра прорыв пулни, партти йађђейкки кун пирки ђĕнсе калани пĕтĕм савăта, пĕтĕм тсехсене хускатса йађĕ. Шуруп тсехĕнђе ђи малтан Виĭĭă комсомолĕссенђен прикатă орканисатсилерĕ. Вăл ваттисене ăмăртăва тухма ђĕнђĕ. Ун хыçăн Митриђ, ватă рапођђи, ваттисенђен прикатă орканисатсилерĕ. Çамрăксемпе ăмăртăва тухрĕ. Комсомолĕссем, комуниссем пурте утарлă прикатăсенђе. Ытти рапођђисем те çурри ытла утарлă прикатăсенђе ĕçлеççĕ. Ĕç хĕрўлленсе карĕ. Прикатăпа прикатă ăмăртаççĕ.

— Ее-е, прикати йапали...—тесе кулађђĕç ыттисем вĕсенђен.

— Епĕр прикатăрах ĕçленĕ...—тесе тăрăхлађђĕç хăшшийĕ, ĕненменнисем.

Анђах Виĭĭăпа Митриђ вĕсем каланине пăхмаççĕ. Вĕсен прикатисем ђи малтанах пĕр-пĕрине ăмăртăва тухса ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем ђи малтан штурма тухрĕç. Кашни ир пĕр-пĕрин прикатисене тĕрĕслеççĕ. Пурте, çĕр прођђăнĕпех ĕçе тухни кашниннех кăмăлĕсене хăпартаĭ. Кашни ир икĕ

прикатир промфинплан хăми çине хăйсем кун каçа мĕн ђухлĕ ĕçленине çыраççĕ. Акă вăл вĕсем промфинплана тултарса пырассишĕн çапăçни.

| Кунсем | Виттă прикатийĕ | Митриђ прикатийĕ | Тсех пĕтĕмпе |
|---|---|---|---|
| Теккапĕрĕн 12-мĕшĕ . . . . . . | 98 прођ. | 100 прођ. | 75 прођ. |
| „ 13 „ . . . . . . | 102 „ | 103 „ | 80 „ |
| „ 14 „ . . . . . . | 105 „ | 106 „ | 82 „ |
| „ 15 „ . . . . . . | 110 „ | 109 „ | 90 „ |
| „ 17 „ . . . . . . | 115 „ | 111 „ | 95 „ |
| „ 19 „ . . . . . . | 130 „ | 125 „ | 100 „ |
| „ 20 „ . . . . . . | 132 „ | 133 „ | 110 „ |

Икĕ хастарлă прикатă ĕçне кура ыттисем те прикатăсем туса ĕçле пуçларĕç. Ыттисем те ăмăртăва тухрĕç. Комуниссем, комсомолĕссем, ватă рапођђисем, çамрăксем прорыва штурмлаççĕ. Васкавлăн, тăрăшса ĕçлесе малтанхи теккатăрах тсех промфинпланне 100 прођђăна çывхартса тултарђĕç. Калама çук хĕрӳлленсе ĕçе тытăнђĕç.

Савăтра тухакан хаçат кашни пилĕк кунтах рапођђисем прорывпа мĕнле çапăçни çинђен кăшкăрат. Кашни пилĕк кунтах прикатăсен ĕçĕсем çинђен çырат. Ђи малта пыракан прикатăсем—Митриђпа Виттăн. Ђи кайрисем Унтри прикати,—Ласăр прикати. Вĕсем промфинплана пĕри: 75 прођ., тепри 81 прођ. тултарнă. Вĕсен прокулсем нумай. Ђи малта пыракан тсехсем шурупнăй, проккатнăй ђи кайрисенђен пăта тсехĕ.

## XIII. ТЕХНĔККĂНА ВĔРЕНМЕЛЛЕ.

Тсехсем тăрăх çăмăл кăвалери прикатисем кастарса çӳренĕ. Вĕсем ăçта мĕн çитменлĕхсем пуррине, ăçта мĕн ђăрмавсем пуррине йăлтах тĕрĕсленĕ. Прорывшăн кам-кам айăп-

лине те шыраса тупнă. Айăп рапоҫҫисенҫе те нумай иккен. Ҫас-ҫасах, рапоҫҫисем шалу илнĕ хыҫҫăн ĕҫе тухмаҫҫĕ. Мĕншĕн? Хăшĕ ĕҫеҫҫĕ. Ирхине вара мухмăр. Пуҫ ыратать, теҫҫĕ. Йе ҫас-ҫасах станоксене тирпейлĕ тытмаҫҫĕ. Ватаҫҫĕ. Ремонтсене хăвăрт тумаҫҫĕ. Вара станоксем тахҫанҫҫен ĕҫсĕр лараҫҫĕ... Йут патшалăхран илсе килнĕ станоксене ĕҫсĕр вырттараҫҫĕ. Кивĕ станоксем минутра 90—100 шуруп туса кăлараҫҫĕ пулсан, йут патшалăхран илсе килнисем темиҫе ҫĕр шуруп кăлараҫҫĕ. Апла пулсан та вĕсене вăхăтра ĕҫе йамасăр мĕн ҫухлĕ ĕҫ ҫухатаҫҫĕ? Ĕҫ вăхăтĕнҫе тата рапоҫҫисем ҫĕлĕм туртаҫҫĕ. Ҫĕлĕм туртмалли пӳлĕме вĕсем «Курилккă» теҫҫĕ. Ҫав курилккăра вара ҫуршар сехет сĕтĕрĕнсе лараҫҫĕ. Мĕн ҫухлĕ вăхăт ҫухатаҫҫĕ?

Тсехсем таса мар. Тирпейлĕ мар. Прак йышлă тухать. Машшинсене таса тытмаҫҫĕ. Ҫак ҫитменлĕхсене пурне те прикатă хаҫат урлă ҫĕмĕрет. Унтанпа савăт нумай тирпейленҫĕ. Прикатă ҫав йĕркесĕрлĕхсем пирки плаккатсем ҫапса тухрĕ. Тсех тасалҫĕ. Прокулсем сахалланҫĕҫ. Машшинсене тирпейлĕрех тыта пуҫларĕҫ.

Пĕр-ик кунран происвотствă канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта рапоҫҫисем, маҫтăрсем, иншенерсем,—пурте ĕҫе мĕнле малалла йамалли ҫинҫен калаҫрĕҫ. Ĕҫе прикатăпа ĕҫлесен ăнăҫлăрах пулать, терĕҫ. Сотсиалисăмлă ăмăрту ĕҫе хытă малалла йарать, ҫĕклет, терĕҫ. Тата штурм теккатинҫе мĕнле пысăк ҫитĕнӳсем туни ҫинҫен сӳтсе йаврĕҫ. Рапоҫҫисем хăйсен ĕҫĕнҫи ҫитменлĕхсене мĕнле пĕтермелли ҫинҫен сĕнӳсем параҫҫĕ.

Происвотствăллă канашлура Митриҫ та пулҫĕ. Ҫунĕ ҫăтаймарĕ унăн, вăл та йулашкинерех тухса каларĕ. Каскалланса пĕтнĕ мăнă аллине хыттăн ҫăмăртаса тытнă хăй. Пĕркеленнĕ ҫамкине тата ытларах пĕркелентернĕ. Сухалне силлесе кĕскен те хыттăн каларĕ.

— Епĕ тата пĕр питĕ пысăк çитменлĕх çинђен каласшăн, терĕ вăл.

— Тата мĕнле çитменлĕх, Митриђ?

— Пысăк çитменлĕх. Ун çине пирĕн çулпуç, Сталин йулташ та кăтартнă. Вăл—епĕр технĕккăна лайăх пĕлменни. Машшинсене пĕлменни. Машшинсем çинђе мĕнле ĕçлемеллине лайăх пĕлменни. Çакă вăл пирĕн ђи пысăк çитменлĕх. Мĕн тенĕха, Сталин йулташ. «Рапођђисен технĕккăна вĕренмелле. Пирĕн технĕккăна пĕлмелле. Пирĕн вăхăтра технĕккă пурне те татса парат̆»—тенĕ.

— Епĕ рапођђисем хушшинђе технĕккă ĕçне вĕренмелли крушок уçасшăн. Çав крушокра ĕçлеме хамăр иншенерсене ђĕнесшĕн. Сăмахран. Иван Влассăвĕђ та пире пулăшма пултарĕ. Вĕсем хамăр çынсем, пире ăнланаççĕ. Пирĕ мĕн кирлине те пĕлеççĕ. Тата прокулшђăксемпе хытă кĕрешмелле. Пирĕн тсехри Йерефей прокулшђăк пеккисене хамăрăн опђăллă сут умне тăратмалла.

Иван Влассăвĕђ вăтам, вăй питти çын. Вăл савăтри аслă иншенер. Самайранпа савăтра ĕçлет. Рапођђисем пурте пĕлеççĕ ăна. Пурте ăна йуратаççĕ. Иван Влассăвĕђ хăй те рапођђисемпе йаланах ăшшăн, кăмăллăн калаçат̆, йаланах кирлĕ çĕрте кăтартусем парат̆. Мĕн ăнланманнисене ăнлантарат̆. Шапшура сухаллă. Калăстăкпа. Çӳçĕсене лайăх йакатса лартнă хăй. Сăмси çине ылттăн куçлăх лартса йанă.

Вăл Митриђ калаҥине хытă итлерĕ. Вата рапођђисене итлеме вĕреннĕ вăл. Митриђ хыççăн хăй те ђăтса тăраймарĕ. Куçлăхне тӳрлетĕрех майласа лартрĕ те:

— Митриђ тĕрĕс калат̆,—терĕ вăл.—Епĕр ђăнах та, технĕккăна нађар пĕлетпĕр. Хамăрăн машшинсене те нађар пĕлетпĕр. Çĕнĕрен, йут патшалăхсенђен илсе килмен машшинсене пĕлме татах йăвăртарах пирĕншĕн. Вĕсене ăнланма, вĕсемпе ĕçлеме татах йăвăр. Технĕккăна пирĕн вĕренмеллех.

Епĕ хам йенђен, ĕçрен тухсан, сирĕн крушокпа тата икĕ сехет хушши ĕçлеме пултаратăп. Ытти иншенерсем те çапла тума килĕшĕç, тетĕп.

— Рапођђисем прорыва хастарлăн штурмлаççĕ. Савăта прорывран кăлараççĕ. Ку—пысăк çитĕнў. Вăл—есĕр технĕккăна та çаплах штурмлама пултарнине кăтартаť.

— Тĕрĕс, Иван Влассăвĕђ!—кăшкăрса йађĕ Митриђ.— Тĕрĕс! Есĕ пире пулăшма сăмах паратăн, епĕр вĕренме сăмах паратпăр. Çапла пултăр, кўр, аллуна.

Пурте алă çупса йанă вăхăтра, Митриђ иншенера аллинђен хытă ђăмăртаса илђĕ.

Рапођђисен происвотствăллă канашлăвĕ савăтăн çĕнĕ планне йышăнђĕ. Прорывран мĕн тери тухнине, çитменлĕхсем ăçта-ăçта йулнине кăтартса хăварђĕ. Хастарлă прикатăсене премн памалла турĕ. Йулашкинђен, Митриђ сĕннĕ тăрăх—пурин те технĕккăна вĕренмелле, терĕ. Çавăнпа та технĕккăна вĕренмелли крушоксем орканисатсилемелле, тесе йышăнђĕ.

Технĕккă крушокĕсене йертсе пырас ĕçре иншенерсем хăйсем çине илђĕç. Ĕçлекенсем технĕккăна тăрăшса вĕренме сăмах пађĕç.

— Пољшевиксем илеймен тĕрексем çук!—тесе саланђĕ канашлу.

## XIV. ПИОНЕРСЕМ ТСЕХРА.

Пеťťа пăђкине кăшт пусарах сĕрме пуçларĕ. Лаптăк, хулăм тимĕре вăл тимĕр касăкан пăђăкăпа касаť. Ăна пĕр пуçĕнђен касса катăкламалла. Çапла хушнă Пеťťана маçтăр. Хăрах аллипе пăђкăн çулă авринђен тытса, тепĕр аллипе пăђăкăна вĕçĕнђен пусса сĕрет вăл.

Пăђкийĕ калама çук çивĕђĕ сасă кăлараť. Ун сассийĕ хăлхана çурса пăрахассăнах туйăнаť. Анђах Пеťťа ăна тах-

çанах хăнăхнă. Петта çеç мар, ытти пионерсем те хăнăхнă вăл сасса.

Авă, Петтапа йунашар йĕркерен тискисем. Вĕсен умĕнђе йĕркерен пионерсем. Анђах тимĕрпе тимĕр сĕртĕнсе ђăтма çук хăлхана ыраттаракан сасă кăларни вĕсемшĕн нимĕн те мар. Вĕсем те машшинсен пайĕсене тасатаççĕ. Хăйраççĕ. Вĕсем хапрăк-савăт шкулĕнђе вĕренекен пионерсем.

Кăнтăрла тăватă сехет вĕреннĕ хыççăн икĕ сехет савăтра ĕçлеççĕ. Шкултан тухса ђĕвĕлтетсе шавласа тсеха ђупса пыраççĕ вара. Маçтăр вĕсене станоксен умне тăратать. Станок мĕнле ĕçленине сăнаса вĕренме хушать. Йе хăй ăнлантарать. Йе урăх пĕђĕкрех ĕçсем тутарать. Вара тискисен умне тăратса машшинсен пайĕсене тӳрлетме, хăйрама хушать. Пионерсем пĕр ӳркенсе тăмасăр ĕçе тытăнаççĕ.

Ăçтан ӳркенђђĕрха вĕсем? Кам, хăшĕ ӳркенсе тăтăр вĕсенђен? Вĕсем вĕт пурте хапрăк-савăт ађисем. Кунтах çуралнă вĕсем. Кунтах ӳснĕ. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те кунтах ĕçлеççĕ. Хăйсем те кунтах ĕçлеме хатĕрленеççĕ... Вĕсем ĕнтĕ, ђăн-ђăн ĕç ађисем. Машшинсен ађисем вĕсем. Пĕђĕкрен машшинсен йурриие итлесе ӳсеççĕ. Пĕђĕкрен ĕç çумне сыпăçса ĕçлеме вĕренсе ӳсеççĕ.

Ĕлĕк пулсан ађасене те пысăккисемпе танах ĕçлеттернĕ. Тӳлессе вĕсене никамран йунĕ тӳленĕ. Савăт хуçисем вĕсен йунне ним шеллемесĕр ĕмнĕ. Анђах хаљ апла мар. Çамрăк ађасем вĕренеççĕ хаљ. Шкулта, хут-кĕнеке çинђен вĕренсе ларнă хыççăн çеç вĕсем, машшинсемпе паллашма ĕçе кайаççĕ. Рапођђисен савăтри ĕçĕпе икĕ сехет хушши паллашаççĕ. Çук, ӳркенсе тăмаççĕ вĕсем. Авă, йĕркипех тăрса кайнă та тимĕре касаççĕ, хăйраççĕ, шаккаççĕ, çавраççĕ. Çамрăк пиђĕсем тăрăх тар йухса çеç тăрать.

## XV. ПЕТ̆Т̆А ПӐҪКӐ ТАТРӖ.

Сасартӑк, ҫипер сӗрнӗ ҫӗртех, Пет̆т̆ӑн тимӗр касакан хурӑҫ пӑҫӑкийӗ пат!—татӑлса карӗ. Пет̆т̆ӑ хӑранипе шартах сиксе илҫӗ.

— А-а, Пет̆т̆ӑ хурҫӑ пӑҫкӑна таса пӑрахрӗ-ӗ!—терӗ кулса ун ҫумӗнҫи Шурӑ.

Хӑй йӑвӑр мӑлатук тытнӑ т̆а, тем шаккаса тӑратҫӗ. Пет̆т̆ӑ хӑйӗн кусне хӑй те ӗненмерӗ. Пӑҫкӑна аллине йарса тытрӗ. Тытса пӑхас, терӗ. Анҫах каллех шарт! сиксе пӗр самантрах икӗ пӳрнипе ҫӑвара персе ҫикрӗ. Ӗмсе илҫӗ. Тинех ӗненҫӗ: пӑҫкӑ ҫӑнах та татӑк мӗн. Татӑк ҫеҫ те марха, ытла та хытӑ хӗрсе кайнӑ мӗн вӑл, питӗ пӗҫерет...

Маҫтӑр Пет̆т̆ӑ патне пырса тӑҫӗ. Аҫасем кӑпӑрр, маҫтӑрпа Пет̆т̆ӑ тавра пухӑнҫӗҫ.

— А-а! Пет̆т̆а пӑҫкӑ татса пӑрахрӗ!—тет пӗри.

— Пет̆т̆ӑ пӑҫкӑ татса пӑрахрӗ!—теҫҫӗ ыттисем.

— Аҫасем! Йурамас̆т̆ апла хӑвӑр йулташу ҫине ӗҫре кӑшкӑрма—терӗ маҫтӑр.

Аҫасем ҫӑнах та шӑпланҫӗҫ.

— Татнӑ пулсан, мӗн вара?—татах пуҫларӗ маҫтӑр. Хӑй куҫлӑхӗ айӗпе татӑк пӑҫкӑ ҫине пӑхса илҫӗ.—Татнӑ—татнӑ. Ӗҫре вӑл пуринпе те пулма пултарат̆. Йапала тени ванмасӑр пулмастех ӗнтӗ. Сыхланарах ӗҫлес пулат̆ ҫеҫ. Ӗҫхатӗрӗсене тирпейлӗрех тыткалас пулат̆.

Пет̆т̆ӑ хӗпхӗрлӗ хӗрелсе кайнӑ. Вӑл маҫтӑр вӑрҫса пӑрахӗ, тесе хӑранӑҫҫӗ. Анҫах маҫтӑр нимӗн те вӑрҫманнине кура лӑпланҫӗ. Ҫапах та, тем пысӑк айӑп тунӑн туйӑнҫӗ ӑна.

— Епӗ кӑшт,—ҫеҫ пусарах сӗре пуҫланӑҫҫӗ...—терӗ вӑл ҫӗтрекен сассипе.

— Хытӑрах пусрӑн пуҫ ҫав. Ытлашши пусса сӗрме йурамас̆т̆ ӑна, пӑҫкӑна. Ӗҫлеме те йӑвӑр, тата татӑлса кайма

та пултарать, терĕ маçтăр Петтăна. Çавăнтах ăна тепĕр пăҫкă илсе тыттарҫĕ. Петтă татах хуçас марҫҫĕ, тесе сыхланарах ĕçлеме пуçларĕ. Аҫасем хăйсен вырăнĕсене кайса тăрса ĕçе тытăнҫĕç..

## XVI. ТЕПĔР ĔÇ ЙУЛНĂ...

Савăт сасси вăрăмăн йанăраса карĕ. Машшинсем шавлама ҫарăнҫĕç. Ĕç пĕтрĕ. Пионерсен вошаттăйĕ Ваҙă аҫасене вăхăтлăха йулма хушрĕ. Аҫасем пĕр кĕтессе Ваҙă тавра пухăнса тăҫĕç.

— Аҫасем!—терĕ Ваҙă.—Пĕлетĕри, савăт пирĕн прорывран тухрĕ. Вăл ĕçре пионерсем те нумай пулăшрĕç. Епĕр савăтри çитменлĕхсене, ҫăрмавсене пĕтерес тесе çăмăл кăвалери прикатинҫе ĕçлерĕмĕр. Промфинплана тултарнă çĕрте те пулăшнă. Супотнĕксем тунă. Çтена хаçаҫĕсем кăларнă. Хамăр та ĕçленĕ. Анҫах тата пирĕн пайан тепĕр ĕç йулнă...

Ваҙă 17—18 çулхи комсомолкă. Унăн тулли пиҫĕсем йăлкăшса çутăлса çеç тăраççĕ.

— Мĕнле ĕç, Ваҙă?—ыйтаççĕ аҫасем.

— Акă мĕнле ĕç. Савăт прорывран тухни çинҫен пирĕн çтена хаçаҫĕ çине çырмалла. Ку пĕрре. Кам аван ĕçленине, кам наҫар ĕçленине кăтартмалла. Ку—иккĕ. Сăмахран, тепĕр ик-кунтан миттĕнк пулать. Унта кам аван ĕçленисене преми параççĕ. Кам наҫар ĕçленисене те мĕн те пулин памалла...

—Тимĕр шапа кĕлетки памалла! Ха-ха-ха!—кулса йаҫĕ Шурă. Унăн вĕтĕ, çинçе кулли шăнкрав сасси пек йанăраса илҫĕ.

— Çук, тимĕр шапа кĕлетки сахал. Епĕ тепĕр йапала пĕлетĕп терĕ Петтă.

— Мĕн, Петтă, мĕн?—харăс тапăнҫĕç аҫасем.

— Хăвăр шухăшлăр,—кулҫĕ Петтă.

Аҫасем шухăша карĕҫ.

— Мĕнле йапалаши?

— Мĕнши?

Çук, нихăшĕ те тупаймаççĕ.

— Мĕн, Петĕ?

— Курăс йалав памалла!—ахăлтатса йаҫĕ Петĕ.

— Ха-ха-ха! Курăс йалав!

— Ҫăнах та, курăс йалав памалла пулаĕ хăшне хутшăнҫĕ Ваҫă. Пирĕн ĕç курăс йалав çĕлесе çырса хатĕрлесси. Тата пионерçенҫен те прорыва пĕтерме тăрăшсах пулăшакансем пулҫĕç. Вĕсене пирĕн преми памалла пулаĕ.

— Кама, кама?—ыйтрĕç аҫасем.

— Сирĕн шухăшпа кама?

Аҫасем пĕр самантлăх шăпланҫĕç. Кашнийĕ хăй пуçĕнҫе хăй йулташĕсене суйласа илҫĕ.

— Ман шухăшпа...—пуçларĕ Верă.

— Мĕн, сан шухăшпа?

— Ман шухăшпа Шурăна пĕр преми памалла,—терĕ вăл.

— Шурă вăл çăмăл кăвалери прикатинҫе те ĕçлерĕ. Плаккатсене те вăлах çырҫĕ. Вăл тăрăшса ĕçлерĕ. Ăна памаллах...

— Тата кама парăпăр?

— Петĕна!—кăшкăрҫĕç иккĕн-виççĕн:

— Вăл та прикатăра ĕçленĕ. Прорыва пĕтерме нумай пулăшнă!

— Вăл пайан пăҫкă татрĕ!—Хирĕçлерĕ Ваҥук.

— Пăҫкă татни ним те мар. Ес хăв супотнĕке те тухмарăн!—витсе хуҫĕç Ваҥука.

Петĕпа Шурăна преми памалла турĕç.

— Çук, епĕ преми илместĕп. Аҫасем кулаççĕ. Кĕвĕçеççĕ—тесе хуҫĕ Шурă кĕтмен çĕртен.—Кĕвĕçеççĕ аҫасем. Илместĕп.

Ваҫă кăна хирĕç тухса каларĕ.

— Ађасем! Шурӑ тӗрӗс каламасть̆. Никам та преми илнӗшӗн кӗвӗçме пултарайmасть̆. Хытӑ тӑрӑшса ӗçлекенсене, малта пыракансене пирӗн пурин те хисеплемелле. Вӗсене парнелемелле. Ман шухӑшпа вӗсен сӑн ӳкерђӗкӗсене «Пионер» шурнал çине çаптармалла. Тата хӑйсене пӗрер çуллӑх «Пионер» шурналне çырӑнса памалла...

— Парас! Парас!—килӗшрӗç ађасем.

Петтӑпа Шурӑна тӑрӑшса прорывпа кӗрешнӗшӗн пӗрер çуллӑх «Пионер» шурнал çырӑнса парса парнелемелле турӗç. Иккӗшӗнне те сӑн ӳкерђӗкӗсене «Пионер» çине çапмалла тесе йышӑнђӗç.

## XVII. КАМ ТЫТТАРӖ.

— Унђухне тата Митриђпа Виттӑна парнелеççӗ. Вӗсен прикатисене парнелеççӗ. Йерефейа çаплах ӗçсе çӳренӗшӗн, прокулсем тунӑшӑн курӑс йалав памалла, терӗç. Пирӗн ӑна ваљљи курӑс ђӑпта тупса çӗтӗк йалав çӗлемелле. Çырса хатӗрлемелле. Вара миттӗнкра тыттармалла...

Ађасем пурте кулса йађӗç. Пӗр пионер çеç хӗрелсе ним кулмасӑр тӑрать̆. Ку вӑл—Çеруш. Йерефей ађи. Ашшӗ ӗçнипе вӑл тахçантанпах тарӑхса пурӑнать̆. Анђах нимӗн те тӑвайmасть̆. Ашшӗшӗн ӑна та питӗ намӑс. Ађасем те Йерефей çинђен калаçа пуçласанах пурте харӑс Çеруш çинелле çаврӑнса пӑхрӗç.

— Епӗр Верӑпа курӑс ђӑптине тупса йалавне çӗлесе хатӗрлӗпӗр. Хамӑр çине пӗр ӗç илетпӗр—терӗ Шруӑ аллине тӑратса.

— Патаккине тупса тума ађасене хушас пулать̆. Кам йалав аврине тума пултарать̆?—ыйтрӗ Ваљӑ.

— Кашнийех пултаратпӑр!

— Епӗ пултаратӑп. Еп илетӗп вӑл ӗçе!—ыйтрӗ Ваççă.

— Сирĕн пайанпа ыран вăл ĕçе тумалла вара. Тепĕр кунне савăтра миттĕнк пулаҭ, миттĕнкҫен туса хатĕрлĕр.

Пионерсем Ваҫă ыйтнине тума сăмах паҫĕç.

— Анҫах йалавне тыттараканни кам пулĕха? Ха-ха-ха!— кулса йаҫĕ Пурис.

— Йерефей вăл хайар. У-у, ун çумне пули-пулми çын пырса та ан çыпăç. Пĕрре йанахран тыттарсан йалаву-йапалу, ним те курса йулаймăн,—кулҫĕç аҫасем.

— Ман шухăшпа вăл ĕçе Миҭкăна хушмалла. Вăл пирĕн пуринҫен те хăйуллă аҫа. Вăл ун пеккисене куркаланă...— терĕç иккĕн-виççĕн.

Миҭкă çирĕп, сывă, тулли питлĕ çивĕҫ аҫа. Хура çӳçĕсем ун, çынсен пек малалла та, кайалла та выртмаççĕ. Шăрт пек тăраççĕ. Вăл ҫăнах та, нумай куркаланăскер. Пĕҫĕклех ашшĕ-амăшне çухатнă вăл. Пĕҫĕкренпех ҫукун çул стантсийĕсенҫе пристăнҫсенҫе, йе хула урамĕсем тăрăх темиçе çул хушши сĕтĕрĕнсе çӳренĕ. Хăй вăхăтĕнҫе пит ăста вăрă та, кăсйеçĕ те пулса курнă. Ӳсĕртен—мĕнрен хăрами пулнă. Малтан, çамрăкрах ҫухне хăранă пулĕ те, кайран хăнăхнă. Столовăйсенҫе çăкăр хыттисем, апат-çимĕç йулашкисем пуçтарса тăранса пурăннă. Хупахсенҫе темĕн ҫухлех ӳсĕр çынсен хушшинҫе çӳренĕ. Вĕсен стакканĕсенҫен ерех-сăра йулашкийĕсене те ĕçсе курнă. Йăваланса выртакан ӳсĕрсен кăсйисене те çараткаланă. Темиçе çул хушши вăл, çĕтĕк-çатăк, çара уран, çара пуçăн, мунҫа тавраш̆ĕ курмасăр пурăннă. Савăтри пионерсен йышне лексен тин Миҭкăн пурнăçĕ, унăн йăлисем те улшăнса кайнă. Халҫ ĕнтĕ йусаннă вăл. Ĕçе тăрăшса ĕçлет. Аҫасемпе малтан килĕштерсех каймасҫҫĕ, халҫ пуринпе те кăмăллă, аван пурăнаҭ.

— Йураҭ, епĕ тыттарăп,—терĕ вăл Ваҫăна пĕр иккĕленсе тăмасăр.—Епĕ ҫăнах та, хайар çынсенҫен хăрамастăп. Йалавне Йерефейа аллинҫенех тыттарăп...

— Ну, йурĕ. Ан хăра. Сана хĕнесе тăкас çук вăл. Унта çынсем нумай пулаççĕ. Аҫасем, çакăнпа пухăва пĕтеретпĕр.— вĕçлерĕ Ваҫă.

— Мĕнле вара?

— Мĕн, мĕнле?

— Мĕнле вара? Манăн тепĕр ыйту пурха,—кăшкăрҫĕ малта тăракан Çеҥккă.—Ман шухăшпа Йерефейа курăс йалав паратпăр пулсан Çерушах та мĕн те пулин памаллах пирĕн. Вăл наҫар пионер. Ашшĕне тӳрлетеймест. Ашшĕшĕн вăл та айăплă...

— Ун ашшĕ питĕ ĕçет. Аҫисемпе вăрçаť. Çеруш ăна пĕҫҫен йусайрас çук. Пирĕн пурсăмăрăн та ăна пулăшмалла!

— Ҫăнах, мĕн тумаллаха?

— Акă, ашшĕне халҫ миттĕнкра курăс йалав тыттаратпăр.

— Тата...

— Тата... Епĕ пĕлетĕп мĕн тумаллине—терĕ Петтă. Епĕр аттепе сотсиалисăмлă токăвăр тунă .Унăн: ĕçмелле мар, килте вăрçмалла мар, прокул тумалла мар. Промфинплана тултарса пымалла. Технĕккă крушокне çырăнмалла. Мана хаçат-шурналсем çырăнса памалла. Манăн...

— Санăн мĕн тумалла?—ыйтрĕç аҫасем.

— Епĕ отретре активлă ĕçлеме сăмах патăм ăна. Вĕренме тăрăшса çӳреме сăмах патăм. Пĕр кун та сăлтавсăр вĕренӳрен йулмастăп. Пĕр кун та, пĕр минут та кайа йулса пымастăп урока... Вăл та ĕçе вăхăтлă çӳреме пулҫĕ...

— Вăт маттур, Петтă.

— Пирĕн те Çеруша çапла тума хушас. Çеруш çапла тума килĕшетни?—ыйтаť Верă.

— Çерушран килĕшессине кĕтсе тăмалла мар. Вăл хăйне пионер, тет пулсан çапла тумалла унăн,—терĕ Ваҫă.—

Унӑн ҫеҫ мар, сирӗн хӑвӑрӑн та ҫапла тумалла. Аттесене сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртӑва ђӗнмелле...

— Йурӗ. Ҫапла тӑвӑп,—терӗ Ҫеруш.—Анђах, ман атте хайаррине есӗр пӗлетӗр. Мана хӗне пуҫласан...

— Ан хӑра. Хӗнемест. Есӗ отрете кил,—лӑплантарђӗҫ Ҫеруша ађасем.

Пуху пӗтрӗ. Аслӑ тсеха йанратса сасартӑк йурӑ йанӑраса карӗ. Ађасем хӑйсен уҫӑ сассийӗсемпе вӑхӑтлӑха шӑпланнӑ машшинсене хускатрӗҫ.

...Савӑт пысӑк. Вӑйлӑ машшинсем.
Ҫынсем те унӑн хурҫӑран.
Епӗр пурте савӑт ађисем.
Пирӗн ҫине те мӑн ӗҫ хурӗҫ ыран...

Мӑлатукӗ, ҫап! Ҫап!
Лапђӑт та хыт ав!
Ӗҫ—хисеплӗ, ӗҫ—ђап,
Ӗҫ вӑл—мухтав!

Анђах пирӗн ђикӗ леш йенђе
Тӑшман кӑшт та лӑпкӑ тӑраймасӑ.
Ишӗлет те урай кив тӗнђе,
Епӗр ӳснине вӑл кураймасӑ.

Винттовкӑ, пер! пер!
Тӳрӗрех тӗлле!
Пур пуршуйсене пӗтер,
Пӗтер, ан шелле!

Ађасем пурте тсехран ҫӗмӗрӗлсе тухрӗҫ. Савӑт алӑкӗнђен тухса килӗсене ђупса салаңђӗҫ. Ҫеруш ђупса тухмарӗ. Вӑл йерипен тухса ҫынсем хыҫҫӑн утрӗ. Унӑн пысӑк ӗҫ. Пысӑк ӗҫ пађӗ ӑна отрет: ашшӗне тӳрлетмелле...

## XVIII. ÇĔНТЕРӲ ХЫÇÇĂН.

Кулленхи пекех, савăт сассипе ĕç пĕтрĕ. Анђах кулленхи пек савăт сассипе рапођђисем савăтран тухса килĕсене саланмарĕç пайан. Пурте савăтри ђи пысăк—мехханиђђĕски тсеха пухăнђĕç.

— Ку тсех вăрăм та аслă. Мађђисем кантăкран. Кантăкĕ тĕксĕмленсе хуралса кайнă. Çав кантăк витĕр тсеха кун çутти ӳкет. Такам тытса ђарнă пек шăпах шăнса ларнă станоксен, машшинсен пиђĕсене çутатаĭ. Тавра нимĕн те хускалмасĭ. Шăпах. Пĕр пысăк винттиљаттăр çеç хăйĕн улакан проппеллĕрĕпе тсехри сывлăша тасатса ĕмсе тăраĭ. Унăн сасси çеç шăпланнă тсехра ӳлет...

Тсех тулли халăх. Пурте кĕтеççĕ.

— Йулташсем!—кăшкăрса йађĕ савком претçетаттĕлĕ Шаркков йулташ. Хăй йăвăç йешђĕк çине хăпарса тăнă.— Пĕтĕм савăтри рапођђисен миттĕнкине уçăлнă тесе шутлатăп.

Рапођђисен ĕшеннĕ, хура пиђĕсем Шаркков çинелле çаврăнђĕç. Тин çеç ĕçе пăрахнă вĕсем. Шарккова нумайах пулмасĭ рапођђисем хăйсен хушшинђен суйланă, çавăнпа та вăл йака калаймасĭ-ха, анђах çапах та ђĕререн, хĕрӳллĕн калаĭ.

— Пирĕн савăтри пролеттарисем хăйсен йатне варлама памарĕç. Прорыва штурмласа савăта прорывран кăлартăмăр. Савăт питĕ çивĕђ çапăçура прорыва çĕнтерђĕ. Прорывран тухрĕ. Рапођђисем утарлă прикатăсем туса, ăмăртса ĕçлерĕç. Малта пыракан прикатăсем Митриђăн. Виттăн, тата хĕрарăмсенђен—Машша прикатиййĕ. Кайра пыракансенђен Ерхип, Хĕлип прикатисем. Кам малта пынине, кам кайра пынине çав хура хăмапа хĕрлĕ хăма çинђе хăвăрах курнă пуљ есĕр. Пурте пĕлетĕр пулĕ.

Вăл хура хăмапа хĕрлĕ хăма çинелле тĕллесе кăтартрĕ.

— Курнă. Пĕлетпĕр!—илтĕнђĕç уйрăм сасăсем.

— Çапла. Савăтăн пайанхи çитĕнĕвĕсене шута илмелле пирĕн. Унăн хастарлă ывăлĕсене палăртса парнелемелле. Пролеттарилле хисеп памалла. Малтанах парттин савăтри комиттеђĕн çекреттарне Çимин йулташа сăмах паратăп.

Шаркков пĕтерђĕ. Ун вырăнне Çимин йулташ хăпарса тăђĕ.

— Йулташсем!—тесе пуçларĕ вăл та хăй сăмахне.—Парттин савăтри комиттеђĕн йађĕпе, сире пролеттарисене, пайанхи пысăк çĕнтерӳ йађĕпе саламлатăп.

Пурте алă çупса йађĕç. Çимин й-ш сăмаххийĕсем аслă тсех тăрăх йан, йан йанраса кайаççĕ. Хăй вăл пĕр хĕрӳллен- месĕр калама вĕреннĕ. Майĕпентерех, сăмаххисене суйласа, ним ђарăнса тăмасăр калаĭ.

— Хăĭ те мĕнле ĕçре те, хăĭ те мĕнле çапăçура та малта, тата кайра пыракансем пулаççĕ. Хастарлисем, найаннисем пулаççĕ. Пирĕн савăтра та вĕсем пур. Прорывпа çапăçнă ђух, штурм вăхăтĕнђе вĕсем хăйсене кăтартрĕç. Пирĕн вĕсене тивĕçлĕ хак памалла пайан. Тивĕçлĕ парнепе парнелемелле...

Таврара шăпах. Пурте Çимин йулташа итлеççĕ...

## XIX. ТИВĔÇЛĔ ПАРНЕ.

— Нумай рапођђисем ыйтнипе,—тет малалла Çимин— тата кам мĕнле ĕçленине хытă сăнаса тĕрĕсленĕ хыççăн, епĕр пролеттарилле хисепе тивĕçлĕ çынсене палăртрăмăр. Хисепе, парнене тивĕçлĕ прикатăсене палăртрăмăр. Ђи малтан: Митриђ прикати. Ватă метталиссем. Çурри ытла комуниссем унта. Плана çаплах тултарса пыђĕç. Плана ирттӗрсе хăйсем хирĕçле план пађĕç. Ăна та тултраса хуђĕç. Виçĕ теккатăра халђђенхи пекех, пĕр прокул та пулман...

— Виҫҫӑ прикати. Ку—комсомолёссен. Ђи малта пыраҫ. Пур ытти ҫамрӑксене пример паракан прикатӑ. Пирён парнене тивёҫлё.

— Машша прикати—хёрарӑмсенђен. Малта пыракан прикатӑ. Парне илме тивёҫлё. Вёсене савӑт «виҫ-кётесё» сӳтсе йавса ҫапла парнесем памалла турё...

Рапођђисем тата хытӑрах итлеме пуҫларёҫ...

— Малта пыракан прикатӑн прикатирё, Митриђ. Ватӑ происвотсвённёк. Утарнёк. Йут патшалӑха, унти хапрӑк-савӑтсене курса ҫӳреме йарас. Унти рапођђисен пурнӑҫёпе паллашса килтёр. Унӑн прикатинђи йулташёсене Совет Сойусёнђи хапрӑк-савӑтсене курса ҫӳреме йарас.

— Виҫҫӑ—комсомолёс. Ђи хастарлӑ утарнёк. Ёҫе вӑхӑтлӑ, тёплё тӑваҫ. Ҫамрӑксене пример параҫ. Митриђпа пёрлех йут патшалӑхсене курса ҫӳреме йарас. Вёсене ҫитес ернере «Апхаҫи» прахут Сойусри ытти утарнёксемпе Йевроппӑ тӑрӑх илсе кайё. Унӑн прикатинђи йулташёсене Совет Сойусё тӑрӑх ҫёнё кикантсене курма йарас.

— Машшана Совет Сойусё тӑрӑх курса ҫӳреме йарас. Ун прикати ђленёсене хёрлё хӑма ҫине ҫапас. Канмалли ҫуртә йарас...

Пурте шатӑртаттарса алӑ ҫупса йађёҫ.

— Хирёҫ пури?

— Ҫук! Йышӑнас!—кӑшкӑрђё темиҫе ҫёр саслӑ миттёнк.

— Ӑҫта вёсем, утарнёксем?—илтёнђёҫ сасӑсем.

Митриђ, Виҫҫӑ, Машша ҫӳлерех хӑпарса тӑђёҫ. Ҫынсен пуҫёнђен ҫӳлерех ҫёкленђёҫ. Ҫук, хӑйсем ҫёкленмерёҫ вёсем. Рапођђисем ҫёклерёҫ вёсене...

— Урра ҫёклес вёсене! Урра!

— Ҫёклес! Ҫёклес!

— Аҫӑр! Тытӑр!

— Урра!!!

Виçĕ утарнĕк пĕр самантра çынсен пуçĕсем çинђе ывтăнма пуçларĕç. Вăйлă алăсем вĕсене çăмăллăн çӳле ывăтса йараççĕ. Унтан татах тытса тата çӳлерех ывтаççĕ...

Кай, çитĕ, шелђмăсем! Ват шăмшакка ватса хуçса пĕтерĕр тата!

Митриђăн çамки çиййĕпе тар йухса анђĕ. Çынсен аллинђен Виттă аран вĕçерĕнђĕ...

Рапођђисем хăйсен паттăрĕсене йуратаççĕ. Йĕри-тавра ăшă, хаваслă кăмăлпа хупăрласа илсе çĕнĕ вăй параççĕ вĕсене...

— Йулташсем!—Каллех пуçларĕ Çимин.—Епĕр пайан хамăр паттăрсене парнелесе ђислатпăр. Епĕр хамăр паттăрсене йуратататпăр. Вĕсем пирĕншĕн нимрен те хаклă. Анђах çапла пулниха ĕлĕк? Ĕлĕк рапођђисем хуçасемшĕн ĕçленĕ. Хаљ вăл хăйĕншĕн, савăнăçлă, телейлĕ пурнăç тăвасшăн ĕçлет. Ĕлĕк ĕç уншăн асаплăх пулнă. Йăвăр пулнă. Хаљ ĕç уншăн хисеплĕ йапала. Хăвăн хастарлăхна, çивĕђлĕхна кăтартмалли мухтавлă ĕç. Йут патшалăхсенђе рапођђисем мĕлйунĕ-мĕлйунĕпе ĕçсĕр лараççĕ, пирĕн пурте ĕçлĕ. Вĕсен кивĕ тĕнђи ишĕлсе пыраť, пирĕн ӳссе пыраť. Сывă пулђђăр пирĕн утарнĕксем! Сывă пултăр Комуниссен парттийĕ!!!

...Тсеха шăнăçаймасăр урра кăшкăрни йанăраť...

## XX. КУРĂС ЙАЛАВ.

— Халĕ утарнĕксене хăйсене сăмах паратпăр.

Анђах утарнĕксем хытă пăлханнипе нимех те калаймарĕç. Машша та, Виттă та рапођђисене хăйсене хисеп тунăшăн тав тукаласа анса тарђĕç. Пĕр Митриђ çеç халăх умĕнђе хытах пăлханмарĕ.

— Епĕ хам хулпуççи çинђе нумай йăвăрлăх йатнă,—тет вăл.—Нумай йăвăр çулсем ман çурăм урлă таптаса каçса

кайнă. Çак савăт йăлт ишĕлсе пĕтнĕҫҫĕ. Ăна ура çине тăратнă çĕрте манăн тар сахал йухман. Прорыва пĕтернĕ çĕрте те епĕ пур вăйа шеллемесĕр ĕçлерĕм. Пире хисеплесе ҫис тунăшăн сире пурне те тав тăватăп. Ҫĕререн тав тăватăп... Малалла та хастарлăн ĕçлеме сăмах паратăп...

Ҫарăнма пĕлмесĕр алă çупаççĕ.

Вăл аллинҫи кивĕ карттусне тăхăнса анма тăнăҫҫĕ. Анҫах кукша лĕпки çине лартнă карттусне каллех илҫĕ. Татах кайалла хăй вырăнне пырса тăҫĕ.

— Ман тав каламалли йулнă,—терĕ вăл.—Акă мĕн.—Çапла епĕр пур вăйа хурса ĕçленĕ хушăрах хăшшисем пирĕн ĕçе ҫăрмантарса пыраççĕ. Епĕр савăта прорывран кăларас, тетпĕр. Прорыва штурмлатпăр. Хăшши пур, килте ĕçсе ӳсĕрĕлсе ĕçе тухмаççĕ. Прокулсем тăваççĕ. Ĕçлес, тесе ĕçлекен çынсене пăтратаççĕ. Намăс ун пеккисене!

— Намăс! Намăс прокулшҫĕксене!—ответлеççĕ таврараи. Каллех хусканса карĕ миттĕнк.

— Сăмахран, пирĕн Йерефей... Пролеттариллĕ калатăп: Йерефей пеккисене шеллесе тăмалла мар. Вăл ĕçсе çӳрет. Темиçе кун ĕçе тухмарĕ. Прокул турĕ. Нихăш прикатăра та тăмасť. Пролеттари йатне çĕртет. Çирĕп тыткаламалла ун пеккисене.

— Намăс Йерефейа!

— Хура хăма çине ăна!

— Хура кассăран шалу памалла.

Малти ретре тăракан каҫака сухаллă хыткан старик пуçне усса тăраť. Çĕлĕкне çамки çинех антарса лартнă вăл. Кăшкăраканнисен йеннелле пĕр-ик хут çаврăнса пăхса илҫĕ. Темскер, кăшкăрса пăрахма тăҫĕ. Анҫах рапоҫҫисем хастарланнă сассийĕ ăна сăмах ҫĕнме памарĕ. Вăл нимĕн ҫĕнмесĕр тăҫĕ. Ку—Йерефей вăл. Çынсем ăна айăплаççĕ. мĕн.

Çынсен хушшипе ик-виçĕ пионер тĕккеленсе малалла тухса тăђĕç. Йерефей умне умне ђарăнђĕç. Хăйсен аллинђе вăрăм патак. Патак вĕçне темпе ђĕркесе хаçатпа витнĕ.

— Йулташсем!—терĕ Митӑкă пĕр хăрамасăр.—Йерефей прокулшђăка намăс, утарнĕксен умĕнђе. Вăл ерех ăшне пута пуçланă. Ăна ваљљи епĕр парне хатĕрлерĕмĕр.

Вăл парнине Йерефейа тыттарђĕ. Сисмен çĕртен сĕннипе çĕленĕ çĕтĕк-çатăк çĕрĕк йалав саланса карĕ.

Йерефей вăрăм патака алла илђĕ. Унăн аллинђе ђăптаран

— Курăс йалав парнелетпĕр Йерефейа.

Миттĕнкри халăх кĕр-р, кулса йађĕ.

— Ха-ха-ха! Вăт тăк парне!

— Çапла кирлĕ ăна .

— Тивĕç, тивĕç!

Пĕтĕм рапођђисем ахăлтата пуçларĕç.

— Ай-йай, Йерефей! Пионерсем мĕнле парне хатĕрленĕ сана ваљљи? Ха-ха-ха!

— Маттур, маттур пионерсем! Аван парне шухăшласа кăларнă.

Митӑкă темле пысăк ĕç тунă пек хашкаса тăрать. Вăл куçне вĕçертмесĕр Йерефей çине пăхать. Ђăнах та, хĕнесе тăкмĕ-и вăл Митӑкăна? Пĕрре йарса илсен?

Анђах Йерефейăн вăл шухăш мар. Вăл, ăнсăртран тыттарнă патак ђăпта йалав иккенне курсанах йалава çĕре пеђĕ. Унтан çынсене сиркелесе хăвăрт миттĕнкран тухса карĕ. Рапођђисем çеç ăна хыçалтан пăхса кулса тăрса йулђĕç.

— Йерефей! Прокулшђăк!

— Çавă кирлĕ сана!

— Туйанђĕ прокулшђăк, ха-ха-ха!

— Ха-ха-ха!..

Пĕтĕм тсех ахăлтатса йулђĕ Йерефейран. Пĕтĕм тсех ахăлтатса ăсатрĕ ăна...

## XXI. ПИТ ПĔÇЕРЕТ.

Йерефей хăй сисмесĕрех савăт килхушшинђен урамалла тухса тăђĕ. Ёнсине хыçса илђĕ вăл. Пиђĕсем пĕçереççĕ унăн. Аван мар вĕт. Хăвпа пĕрле тахçанђђен пĕр савăтра ĕçленĕ çынсем мăшкăлама кулма пуçларĕç. Çамрăксем, пионерсем те кулаççĕ... Пĕтĕм савăт халăхĕ умĕнђе, миттĕнкра намăслантарђĕç...

Савăт килкарти алăкĕнђе милитсионер тăраť. Йерефей васкаса утса тухнине курса вăл, ăна çул пађĕ. Йерефей пăлханнине курђĕ вăл. Хыçалтан тинкерсе пăхса тăрса йулђĕ.

Йерефей алăкран тухсассăнах йĕри-тавралла пăхса илђĕ.

— Аван мар çав. Ытла та аван мар.—Шухăшласа каларĕ вăл хăйне хăй.—Ытла та аван мар. Ватлăхра çын кулли пулас пулаť.

Сасартăк, ун куçĕсем пĕр çĕре çивĕђ сăнă пек пырса тирĕнђĕç. Савăт алăкĕ умĕнђе çакăнса тăракан пысăк хăма çине. Хăмине варринђен икке пайланă. Çуррине хĕрлĕ сăрпа сăрланă, çуррине хурапа. Хĕрлĕ хăма çинђе Митриђ, Виťťă, Машша тата ыттисен йађĕсем. Хура хăма çинђе пысăккăн: **«Йерефей Çтеппанăв—прокулшђăк. Пйантсă. Намăс ăна пролеттари йатне çĕртнĕшĕн!»** тесе çырса хунă. Ун йађĕ урампа пынă ђух катаранах курăнса тăраť. Катаранах курăнаť...

Йерефей пĕр самант хăй йађĕ çине тинкерсе пăхса тăђĕ. Унтан ним те курас мар, тесе вăрт, айаккалла çаврăнса утрĕ. «Кунта та ман йат!—шухăшласа кăшкăрђĕ вăл хăй ăшĕнђе— Ман йат хура хăма çинђе! Манран пĕтĕм урам кулма пуçлаť...».

Каллех пиђĕ пĕçерсе илђĕ. Каллех ăна ђĕринђен темĕскер ыраттарђĕ. Анђах вăл çынсене паллă ан пулттăр, тесе ним пулман пек, пуçне ђиксе килнелле утрĕ. Куçĕсем ниме

те курмаççĕ. Куçĕсем сапаланнă унăн. Умĕнђи урам урлă-пирлĕн курăнса кайат̆. Çынсем кутăн-пуçăн, кайалла, малалла утнă пек... Хăйĕн ури айĕнђе ним çук пек... Вăл таçта, хăй сисмесĕр çĕр айне путнă пек туйăнат̆...

— А-а. Йерефей пиђђе! Ăçталла вĕçтеретпĕр!

Йерефейа хирĕç мыскарçă старик Парамон пырат̆. Вăл катаранах çĕлĕкне хывса Йерефейа сывлăх сунат̆. Йерефей шартах сикрĕ. Сасартăк ыйăхран вăранса кайнă пек пуçне çĕклерĕ.

— Килелле уттаратăпха.

— Ат̆а, шалу илме. Пайан шалу параççĕ, полуђкă. Сыпкалăпăр кайран пĕрле.—Хăрах куçне хĕссе сурђăкне туглăн çăтса илђĕ Парамон.

Йерефейăн полуђкă шухăшĕ мар. Анђах килте арăмĕ кашни кунах укçа илессе кĕтеђђĕ. Вăл çавна аса илсе пĕр самант шухăшласа тăђĕ.

— Сыпасси тĕп пултăрха вăл. Полуђкине илмеллех пулат̆. Ат̆а, кайăпăр.

— Мĕн тĕп пултăрри пур! Пайан çеç марçке...

— Çук, ĕçместĕп еп урăх. Пăрахатăп...

## XXII. ХУРА КАССĂ.

Савком çуртĕнђе пур пӳлĕмсенђе те тĕтĕм. Ђĕлĕм тĕтĕмĕ. Вăрăм кăритор тăрăх рапођђисем уткаласа çӳреççĕ. Пĕр çĕрте, кассă умĕнђе вун-вунпиллĕк çын ђеретленсе тăнă. Шалу укçи илеççĕ. Хăйсем пĕр-пĕринпе калаçкаласа шав кулса тăраççĕ. Шавлаççĕ Йерефейпа Паромон та пырса ђеретленсе тăђĕç.

Рапођђисем Йерефей килсе тăнине сисрĕç. Тем пăшăлтаткалаççĕ хăйсен хушшинђе. Йерефей йенелле пăхкалаççĕ. Ун çине пӳрнисемпе тĕллесе кăтартаççĕ. Тем калаççĕ. Кулаççĕ.

Йерефей пурне те пит аван сисет. Ҫынсем унран мăшкăланине те сисет вăл. Ун ҫине пӳрнисемпе тĕллесе кăтартнине те курать.

Анҭах нимĕн те палăртасшăн мар хăй. Урăх ҫĕрелле пăхса тăрать...

Рапоҭҭисем ҭеретпе укҫа иле-иле кайаҫҫĕ. Ҭерет малалла шăвать.

— Малалла тата кам? — илтĕнҭĕ хĕрарăм сасси кассă ҭӳреҭинҭен.

— Ҫтеппанăв Йерефей,—мăн сасăпа каларĕ Йерефей.

— Ҫтеппанăв Йерефей?

— Та, та. Ҫапла.

— Ĕҫ номĕрĕ?

— 8973.

— Сирĕн йат ҫук кунта. Авă, ҫав йунашар кассăна кай. Унта параҫҫĕ сире.

— Мĕнле кунта ҫук? Епĕ кунти рапоҭҭиҫке! Акă, манăн ĕҫ номĕрĕ...

— Прокулшҭăк вăл! Авă вĕсен кассийĕ! — Кулса йаҭĕ пĕр рапоҭҭи. Ăна илтсе ыттисем те ахăлтатса йаҭĕҫ.

— Прокулшҭăк вăл! Прокулшҭăк! Ха-ха-ха!

— Йерефей! Авă сан кассă! Ха-ха-ха!

Йерефейа темиҫен, темиҫе пӳрне тепĕр кассă ҫинелле тĕллесе кăтартрĕҫ.

— Ҫул парăр ăна! Ей, ҫул парăр прокулшҭăка!

Вăл йунашар ҭӳреҭе умне пырса тăҭĕ. Ҭалăш-ҭĕлĕш саспаллисемпе, ҭăпта ҫине, кассă умне:

**«ХУРА КАССĂ**
**ПРОКУЛШҬĂКСЕНЕ, ПЙАНТСĂСЕНЕ ВАЉЉИ.**
**НАМĂС КУНТАН УКҪА ИЛЕКЕНСЕНЕ! НАМĂС»!**

тесе ҫырса ҫапнă. Йерефей саспаллисене пĕрерĕн суйласа, ҫырнă сăмахсене вуласа тухрĕ. Унăн пиҭĕсем татах хытă-

рах пĕçерсе илҕĕç. Ҕĕрине такам вĕри шывпа сапса пĕçерт-рĕ. «Вăт тăк на! Кунта та капла мăшкăлаççĕ!» ҕăтаймасăр каларĕ вăл. «Кассăра та мăшкăлаççĕ»!

Васкаса укçана ывăçласа илҕĕ те, кассă умĕнҕен вĕçтер-се тухрĕ. Кулнă сасă çеç хыçалтан йанăраса йулҕĕ. Кунта та кулса ăсатрĕç Йерефейа...

Йерефей ним пĕлмесĕр урама тухрĕ. Тинкерсе тaçталла пăхса тем шухăша карĕ вăл. Йерипен кил йенелле утрĕ. Урисем темиçе пăт йăтнă пек йăвăррăн илĕнсе йăвăррăн пусăнаççĕ...

— Мĕнле ха капла? Йурамасť тек кун пек пулма! Йура-масť... терĕ вăл хыттăн хăйне хăй...

## XXIII. СОТСИАЛИСĂМЛА ТОКĂВĂР.

Çеруш кантăк умĕнҕе, сĕтел çине ҕавсаланнă та хаçат вуласа ларať. Вăл килте пĕҕҕенех. Тулта каç пулса килет. Кантăк йерипен кăвакарať. Çерушĕн амăшĕ каçхи çменăра ĕçлет. Çĕрле тин килет...

Тултан, картлашка çинҕен йăвăр ура сассисем илтĕнеç-çĕ. Çерушăн ашшĕ алăкран кĕрсе тăҕĕ. Çиленҕĕк сăнлă хăй. Паллах, пусăрăнҕăк кăмăллă. Хытă тарăхни катаранах паллă. Нимĕн те ҕĕнмерĕ, çĕлĕкне хывса хуҕĕ те, малалла иртрĕ.

Пĕр самант Çеруш ашшĕ çине тинкерсе пăхса тăҕĕ. Ним ҕĕнме аптăрарĕ. Мĕнрен пуçлас? Çапах та, кăшт иккеленсе тăнă хыççăн сăмах хушрĕ.

— Атте, есĕ пире çемйипех намăслантăратăн. Хупаха çаплах çӳресе пăсăлтăн. Унта такам та сĕтĕрĕнсе çӳрет. Çавсем сана пăсрĕç. Савăтра сан пек прокулшҕăк никам та çук. Отретре те мана сан пирки вăрçаççĕ. Мана санпа то-кăвăр тума хушрĕç...

Çерушăн сасси ҕĕтрет. Аван мар ăна. Хăй ашшĕ вĕт ха.

— Ан нăрла,—татса хуђĕ Йерефей.

Анђах апла кăшкăрђĕ пулсан та хăй ађи умĕнђе хăй питĕ айăплине туйса илђĕ вăл. Малтанхи пек «Молђђат», тесе кăшкăрса пăрахмарĕ. Çапах та, урăх Çеруша хирĕç нимĕн те калаймарĕ.

— Ан нăрла мар, мана отретре хушрĕç...

— Çăмарти ђăххине вĕрентнине хăçан куртăн ес?

— Йурат. Хаљ ес тарăхса килнĕха пайан. Çапах пирĕн токăвăр тумаллах лекет. Епĕ токăвăрне çырса хатĕрлĕп унђђен...

Каçхине, амăшĕ килсен, Çеруш амăшне хут тыттарат. Хуђĕ çине шултăран çырнă:

### «СОТСИАЛИСĂМЛА ТОКĂВĂР».

Епĕр ашшĕпе ывăлĕ, Çтеппанăв Йерефейпа Çеркей Йерефейĕв хамăр хушăра çак токăвăра йышăнатпăр. Токăвăр тăрăх епĕ, Çтеппанăв Йерефей, çаксене тума пулăшап:

1. Пайанран малалла ĕçме пăрахатăп.
2. Савăтра хастарлă ĕçлеме сăмах паратăп.
3. Утарлă прикатăна çырăнатăп. Ăмăртса ĕçлетĕп.
4. Пĕр, прокул та тумастăп. Ĕçе вăхăтра çӳретĕп.
5. Хам станока тирпейлĕ тытатăп.
6. Ĕç планне йаланах тултарма пулатăп.
7. Технĕккăна вĕренме крушока çӳре пуçлатăп...

Унтан Çеруш сăмах парат:

**Епĕ Йерефейĕв Çеркей, хам йенђен çаксене тума пулатăп:**

Çеруш вĕренме вăхăтлă çӳреме, тăрăшса вĕренме, отретре активлă ĕçлеме сăмах парат хăй йенђен.

Çеруш амăшĕ тахçанђђен токăвăра вуласа тăђĕ. Тĕплĕн паллашрĕ вăл унпа.

— Аван йапала,—терĕ вăл.—Тахçанах тумалласкер. Ма нăн мĕн тумаллаха кунпа?

— Çвитетлĕ пулап, тесе алă пусмалла сан, анне.

— Йуре, йурĕ. Пусăп.

Çеруш амăшĕ Çерушпа Йерефей алă пуснисем хыççăн: «Епĕ токăвăра пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе пыма пулатăп.

Çвитетлĕ Варвара Çтеппанăвă»—

тесе алă пусса хуђĕ.

Виççĕшĕн те пиђĕсем хавассăн йăлкăшса илђĕç. Виççĕшне те тем пек пысăк ĕç тунăн туйăнђĕ вĕсене. Токăвăр турĕççке вĕсем. **Сотсиалисăмлă** токăвăр. Сотсиалисăм тăвассишĕн кĕрешмелли токăвăр...

## XXIV. ХАМ КУÇПА КУРТĂМ.

— Йăлтах хам куçпах куртăм,—тет Митриђ.—Хам куçпах курса çӳрерĕм. Мана çын каламан. Никам та вăл ђăн мар, тесе те калама пултараймасť...

... Савăт клупĕн аслă салĕнђе халăх лăках. Салра тĕттĕм. Стсенă çинђе çутă. Стсенă çине Митриђ тухса тăнă та ик аллине саркаласа, йе ђышкисене ђăмăртаса калаçаť. Вырăнĕ-вырăнĕпе хытă кăшкăрса калаçаť вăл. Вырăнĕ-вырăнĕпе итлесе ларакан халăха култараť.

— Унта пире никампа та калаçтарасшăн мар,—тет вăл.— Кашни утăмрах пирĕн хыçран йытă пек сыхласа йĕрлесе çӳреççĕ. Хамăр çĕршывра курнăи есĕр çавăн пеккине? Çук унпек мăшкăл пирĕн. Ĕлĕк çеç пулнă вăл çапла...

Пурте Митриђ каланине пит тимлĕн итлеççĕ.

— Урамсем тăрăх рапођђисем выçă, ĕççĕр сĕтĕрĕнсе çӳреççĕ. Пурин те пиђĕсем сăнсăрланса кайнă. Хĕрарăмсем, ађасем... шуђĕ çук выçса çăкăр ыйтса çӳреççĕ .. Хапрăк-са-

вăтсем çурри ытла ĕçлемеççĕ. Кашни кунах татах та татах хупăнаççĕ вĕсем.

— Пирĕн кашни кун çĕнĕрен çĕнĕ хапрăк-савăтсем уçăлаççĕ—ответлет вăл хăйне хăй.—Çĕнĕ пулӡнитсасем, çĕнĕ шкулсем уçăлаççĕ... Пирĕн кунта пурте ĕçлĕ. Хуласем тăрăх выçса ыйткаласа çӳрекен çынсем çук. Епĕр çĕнĕ пурнăç тăватпăр!

— Пĕрре, пĕр хаçатра,—малалла калаť Митриӡ,—пĕр пĕлтерӳ çапнă. Пĕр кантурта хутсем леçсе çӳрекен çын кирлĕ пулнă. Тепĕр кунне çав çын вырăнне ĕç шырама 600 çын пынă! Ирех пырса алăка пĕр вĕççĕр ӡеретленсе тăнă. Çав ӡеретре тăнă çĕртех хăшшийĕ кайа-кайа ӳкнĕ... выçăпа... Çапла пурăнаççĕ йут патшалăхри рапоӡӡисем...

...Тĕлĕнсе кайса, пăрахса итлет сал Митриӡа. Хăй куçĕпе курнă вĕт ха вăл... Митриӡ пĕр ӡарăнса тăмасăр малалла калаť.

— Çак вăхăтрах, йака. çапçутă çутăлса выртан урамсем тăрăх илемлĕ, çапçутă автомопилсем ӡупаççĕ. Вĕсем çинӡе ӡаплă хуçасем çӳреççĕ. Тутă, мăнтăр пиӡĕсене çутатса, ылттăн шăлĕсене кăтартса кулаççĕ хăйсем. Пурçăн тăхăннă майрисемпе йарăнса ӡупса çӳреççĕ...

— Урамсенӡе тата шантармсем, политсисем нумай. Вĕсем рапоӡӡисем пăлханасран хăраççĕ. Анӡах рапоӡӡисем вĕсене пăхмаççĕ. Кашни кун пирĕн йенелле çаврăнаççĕ. Вĕсем те револӡутси тума хатĕрленеççĕ унта пире:

— Епĕр сирĕнпе. Пирĕн çине йаланах шанса тăрăр. Есĕр хăвăр çĕршыва çирĕплетĕр. Кирлĕ вăхăтра епĕр сире пулăшăпăр,—теççĕ вĕсем· Пирĕн ӡăнах та, вĕсем çине шанмалăх пур. Анӡах пирĕн хамăрăн та вĕсене пулăшмалла. Хамăр çĕршыва сотсиалисăм туса вĕсене çул кăтартмалла.

— Пĕр сăмахпа каласан, унта мул хуçисем, пуйансем ыра кураççĕ. Ĕçхалăхĕ ĕççĕр, выçă асапланса пурăнаť. Унта

пуранаç куллен ишӗлсе пырать. Револютси пуласси инçе мар. Кунта... Хамӑр ҫикӗ урлӑ каçсан...—Митриҫ пиҫӗ çутӑлса илҫӗ.—Кунта пирӗн вӗресе тӑрать пуранаç!—Кӑшкӑрса йаҫӗ Митриҫ хаваслӑн.—Кунта пирӗн ҫӑн-ҫӑн пуранӑç!—кӑшкӑрать вӑл. Епӗр хамӑр çӗршывра сотсиалисӑм тӑватпӑр! Çӗнӗ хапрӑк-савӑтсем кикантсем уçатпӑр! Пур çӗрте те хамӑр хуçа. Хамӑр хуçа! Хамӑршӑн, ӗççыннишӗн ӗçлетпӗр. Утарлӑ прикатӑсем туса ӑмӑртатпӑр. Кунта пирӗн пуранӑç куллен кун ҫеҫекленсе пырать. Сывӑ пултӑр ҫеҫекленен Çӗршыв—Совет Сойусӗ!

Пӗтӗм сал кӗрлесе алӑ çупса йаҫӗ. Ку вӑл Митриҫ, хӑй йут патшалӑхра курса çӳренисем çинҫен ӗçлекенсене каласа парать. Икӗ уйӑх унта курса çӳренӗ вӑл...

... Савӑт прорывран тухнӑранпа 4—5 уйӑх та иртрӗ. Митриҫпа Виҫҫӑ та йут патшалӑха кайса килҫӗç. Йерефей та нумай йусанҫӗ. Вӑл утарлӑ прикатӑна çырӑнса хастарлӑ ӗçле пуçларӗ. Технӗккӑна вӗренмелли крушока çаплах çӳрет. Технӗккӑна вӗренет. Хӑш ҫух хӑй тӗллӗн аппаланать вара. Шурӑ хута саркаласа хурать те апат çимесӗр темле кукӑр-макӑр йӗрсем туса апат çимесӗр шухӑшласа ларать. Иншенер патне çапла ҫупать. Ӗçрен тухсан тсехра тем ӗçлет...

Çерушпа амӑшӗ шалт тӗлӗнҫӗç унран. Анҫах Йерефей никама та ним те шарламасть...

Пӗрре савӑтӑн хӗрлӗ хӑми çине савӑт тиректӑрӗн прик-касне тухса çапнӑ.

### «73-мӗш №-лӗ ПРИККАС.

§

Савӑт управленийӗ йаҫӗпе Çтеппанӑв Йерефей ӗçлекене ӗçре хастарлӑ ӗçленӗшӗн тав тӑватӑп.

§

Çтеппанӑв Йерефей çӗнӗ станок шухӑшласа кӑларнӑ. Ун пек станоксене епӗр йут патшалӑхран илсе килеттӗмӗр. Хаљ хамӑрах тума пуçлатпӑр. Çтеппанӑв йулташ темиçе çӗр пин тенкӗлӗх патшалӑх укçине тӑкак тӑвасран хӑтарђӗ. Куншӑн Çтеппанӑв Йерефейа, 1.000 тенкӗ укçа парне парас.

§

Çтеппанӑв Й-ша Севет Сойусӗнђи çӗнӗ кикантлӑ хапрӑк-савӑтсене курса çӳреме йарас.

Савӑт тиректӑрӗ Киренккӑ»

тесе çырнӑ приккасӗ çине.

Пӗтӗм савӑт питӗ хавассӑн йышӑнђӗ ку приккаса, Йерефейа каллех рапођђисем хисеплеме пуçларӗç...

76195р

Хакĕ 35 пус
Цена 35 коп.

— 2

УЙЫП М. = Там, где гудят машины

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары 1932